# Çĕнтерӳ ялавĕ

**Муркаш район хаçачĕ** **1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать**

*24 (9059) №* ✻ *Эрнекун, 2023 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 23-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*



**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ! ХАКЛĂ ЙĂХТАШСЕМ!**

**Сире Республика кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!**

**Республика кунĕ – пирĕнтен кашниншĕнех чи паллă кун, сумлă уяв.**

**Тăван Чăваш Ен – наци йăли-йĕркине тата ăс-хакăл пуянлăхне упракан, тĕрлĕ халăх çынни пĕр çемьери пек туслăн килĕштерсе пурăнакан çĕр-пин юрă, çĕр-пин тĕрĕ çĕршывĕ.**

**Эпир пурте республикăн хальхи пурнăçĕпе унăн пуласлăхĕшĕн тăрăшатпăр. Экономика, промышленноç тата ял хуçалăх вăй-хăватне ӳстеретпĕр, социаллă сферăна аталантаратпăр.**

**Республикăн чи пысăк пуянлăхĕ – эсир пурте – республикăра пурăнакан тата унта çуралса ӳснĕ хаклă çыннăмăрсем тата паянхи ырлăхăн çирĕп никĕсне хывнă ветерансем.**

**Шăпах эсир – Чăваш Енĕн чун хавалĕ, унăн вăйĕ тата тĕрекĕ.**

**Малашне те паянхи пек пĕр шухăшлă пулса, вăйсене пĕрлештерсе кал-кал ĕçлеме çирĕп вăй-хал сунатăп!**

**Чăваш Ен аталантăр!**

**Пирĕн кашнийĕн пурнăçĕ ыранхи кун шанчăкĕпе тултăр!**

**Уявпа! Юратнă Чăваш Ен – Республика кунĕпе сире пурне те!**

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Олег НИКОЛАЕВ.**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПУРĂНАКАНСЕМ ТАТА ХĂНАСЕМ! ХАКЛĂ ТУССЕМ!**

**Республика кунĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп!**

**Ку уяв Чăваш Ене юратакансене, унăн çитĕнĕвĕсемпе савăнакансене, хăйĕн пĕчĕк Тăван çĕршывĕн ăнăçлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшакансене пĕрлештерсе тăрать. Кунта тĕрлĕ наци представителĕ ĕçлесе пурăнать. Вĕсемшĕн Чăваш Ен пĕрлехи кил пулса тăнă. Ку вăл – ĕçчен, пултаруллă, çирĕп кăмăл-туйăмлă çынсен çĕрĕ. Вĕсем хăйсен историйĕпе тата культурипе мăнаçланаççĕ, Раççее шанаççĕ, Тăван çĕршыва сыхлаççĕ, унăн экономикипе хăватне çирĕплетме хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăваççĕ.**

**Тăван республикăна малалла та тăнăç аталантарасси, çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатса пырасси – ытларах пирĕн пĕтĕçӳлĕхрен, çирĕп кăмăллă пулнинчен, ăна чечеклентерме тăрăшнинчен килет. Унта малашне те пурăнас, ĕçлес, ачасем ӳстерес килтĕр.**

**Шанса тăратăп, пĕрле эпир хамăрăн çитĕнӳсене сыхласа хăварса малалла аталантарса пыма пултаратпăр. Çавна валли пирĕн питĕ пысăк производство вăй-хăвачĕ те, паха ĕç ресурсĕсем те, аслă ăрăвăн ăс-хакăлĕ те, çамрăксен энергийĕ те пур.**

**Çак кун савăнăçпа, мăнаçлăхпа тата малашлăх шанчăкĕпе тулли пултăр. Пурсăра та пуçаруллă ĕçĕрсенче ăнăçу, тулăх пурнăç тата ырлăх сунатăп!**

**Чăваш Республикин**
**Патшалăх Канашĕн председателĕ**
**Леонид ЧЕРКЕСОВ.**

# Республика хăйĕн çуралнă кунне уявлать




*Июнĕн 24-мĕшĕ – Республика кунĕ, тăван Чăваш Республики йĕркеленнĕ кун, Чăваш Енре пурăнакан кашни çыншăнах чи çывăх та пĕлтерĕшлĕ уяв. Республика хăйĕн çуралнă кунне анлăн паллă тăвать. Пысăк уявпа çыхăннă пĕлтерĕшлĕ мероприятисем республикăра пуçланнă ĕнтĕ. Июнĕн 19 – 21-мĕшĕсенче Мускаври Раççей Федерации Пухăвĕн Федераци Канашĕнче Чăваш Республикин кунĕсем иртрĕç.*

*Уяв мероприятийĕсенчен ытларахăшĕ кăçал республика тĕп хулинче Шупашкарта тата Çĕнĕ Шупашкарта иртет. Вĕсене Муркаш муниципалитет округĕн делегацийĕ, предприяти-организацисем, пирĕн ăстасемпе пултарулăх ушкăнĕсем те хутшăнаççĕ. Ун пирки тĕплĕнрех – хаçатăн çитес номерĕнче.*

**Ларуран**

# Кулленхи ыйтусене сӳтсе яврĕç

**Депутатсен округ Пухăвĕн черетлĕ вунулттăмĕш ларăвĕ июнĕн 20-мĕшĕнче округ администрацийĕн ларусен залĕнче ĕçлерĕ. Ларăва депутатсемсĕр пуçне округ пуçлăхĕ Алексей Матросов, район прокурорĕ Алексей Галахов, администрацин явапллă ĕçченĕсем, территори пайĕсен пуçлăхĕсем, предприяти-организацисен ертӳçисем хутшăнчĕç. Ларăва депутатсен округ Пухăвĕн председателĕ Александр Иванов ертсе пычĕ.**

Ларура депутатсем кун йĕркине кĕртнĕ вунвиçĕ ыйту пăхса тухрĕç. Пĕр мандатлă Турай тата Хорнуй суйлав округĕсем тăрăх депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕсен хушма суйлавне ирттерессин ыйтăвне сӳтсе яврĕç. Хушма суйлава 2023 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче ирттерме йышăнчĕç.

Округ Пухăвĕн социаллă тата культура ĕçĕ-хĕлĕн, сывлăх сыхлавĕн, вĕренĕвĕн, физкультурăпа спорт ыйтăвĕсемпе ĕçлекен яланхи комиссие ертсе пыма Александр Давыдов депутата çирĕплетрĕç.

Муркаш муниципалитет округĕн Уставне кĕртме сĕнекен улшăнусем пирки округ администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен тата право енĕпе тивĕçтерессин пайĕн пуçлăхĕ Марина Петрова чарăнса тăчĕ.

Кун йĕркинчи тепĕр ыйтăва сӳтсе явса депутатсем Муркаш муниципалитет округĕн 2023 çулхи тата планланă 2024 çулпа 2025 çулти бюджетне улшăнусем кĕртрĕç. Асăннă улшăнусемпе округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева паллаштарчĕ. Çапла вара тӳрлетӳсем тунă хыççăн округăн 2023 çулхи бюджечĕ тупăшсемпе 1 млрд та 109 млн та 562,3 пин тенкĕпе, расхутсемпе 1 млрд та 229 млн та 119,6 пин тенкĕпе танлашать.

Экономика тата инвестици ĕçĕ-хĕлĕн пайĕн пуçлăхĕ Ольга Тимофеева Муркаш муниципалитет округĕн 2035 çулчченхи тапхăрти экономикăпа социаллă аталану прогнозне пурнăçлассипе мĕнле ĕçлесе пынипе паллаштарчĕ.

Ларура кунсăр пуçне депутатсен Муркаш муниципалитет округĕн Пухăвĕнчи çамрăксен парламенчĕ çинчен калакан положение, çамрăксен парламентне йĕркелеме конкурс комиссине çирĕплетрĕç. Ку ыйтусем çинче округ администрацийĕн пуçлăхĕн çамрăксемпе ĕçлекен советникĕ Михаил Николаев чарăнчĕ.

Депутатсем ларура çавăн пекех депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн унччченхи хăш-пĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртрĕç, ытти ыйтăва сӳтсе явса йышăнусем турĕç.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

**Раççейре**

# Ыран – Çамрăксен кунĕ

**Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн йышăнăвĕпе кăçалтан тытăнса Çамрăксен кунне июнь уйăхĕн юлашки шăматкунĕнче уявлаççĕ. Çавна май ыран, июнĕн 24-мĕшĕнче, Раççейре Çамрăксен кунне паллă тăваççĕ.**

**Унччен ку уява 1993 çултанпа июнĕн 27-мĕшĕнче паллă тунă. СССР-та вара Совет çамрăкĕсен кунне 1958 çултанпа июнь уйăхĕн юлашки вырсарникунĕнче уявланă.**

**Кăçал Çамрăксен кунĕ Республика кунĕпе пĕр килет. Çавна май çамрăксен тĕп уяв мероприятийĕ те Шупашкарти Хĕрлĕ площадьре иртет. Кунта Çамрăксен кунне халалланă концерт пулать. Çамрăксене Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев саламлать.**

**Июнĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта çамрăксен ĕç слечĕ иртет. Июнĕн 24-мĕшĕнче «Команда молодых лидеров» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисемпе финалисчĕсене савăнăçлă лару-тăрура саламлаççĕ. Ку мероприяти Правительство çуртĕнче пулать.**

**Муркаш муниципалитет округĕнчи культура учрежденийĕсем те территори пайĕсенче çамрăксене халалланă тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ.**

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

**Официально**

**Чувашская Республика**
**Моргаушское районное**
**Собрание депутатов**

**РЕШЕНИЕ**

**20.06.2023 г. № С-16/2**
село Моргауши

**О назначении дополнительных выборов депутатов Собрания депутатов Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики по Тораевскому одномандатному избирательному округу № 13 и Хорнойскому одномандатному избирательному округу № 14.**

В соответствии со статьями 10 и 81.1 Федерального закона № 67 – ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», ст. 5 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» и Уставом Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики,

**СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ**
**МОРГАУШСКОГО МУНИЦИПАЛЬНОГО ОКРУГА**
**р е ш и л о:**

1. Назначить дополнительные выборы депутатов Собрания депутатов Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики по Тораевскому одномандатному избирательному округу № 13 и Хорнойскому одномандатному избирательному округу № 14 на 10 сентября 2023 года.
2. Направить настоящее решение в Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
3. Настоящее решение вступает в силу со дня его официального опубликования.

**Председатель Собрания депутатов**
**Моргаушского муниципального округа А.В. ИВАНОВ.**

**Саламлатпăр**



Хисеплĕ те чун юратнă кинĕмĕре – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Раиса Николаевна ЕРШОВĂНА,** çуллахи чи илемлĕ уйăхра çуралнăскере, сумлă юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Хăвăрăн ачăрсемпе, мăнукăрсемпе, тăванăрсемпе татах та малалла чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр, упăшкапа мăшăрлăн, савăнăçлă пурăнма сире эпир çирĕп сывлăх, илемлĕ те тăнăçлă кун-çул сунатпăр. Сирĕн пурнăçăн ылтăн çӳллĕшне çирĕппĕн çĕнсе илмелле пултăрччĕ.

**Салампа: К.П. Ершов, Г.Ф. Ершова.**

**Асăнупа хурлăх кунĕ**

# Эпир ӳснĕ аттесĕр

Эп çуралнă сивĕре,
Пурнмаллаччĕ телейпе.
Гитлер вăрçă пуçарса
Татрĕ пирĕн ĕмĕте.
Пилĕк çула çитиччен
Савăннă-ха аттепе.
Илсе кайнă хăйĕнпе,
Шурă Атăл хĕррине.
Атте ишнĕ шыв çинче,
Тытнă пăрахут рульне.
Хĕл çитсен кайнă вăрçа
Тăшманпала çапăçма.
Вăрçă нуши – чĕр нуша,
Никама та хĕрхенмен.
Анне юлнă мăшăрсăр,
Эпир юлнă аттесĕр.
Ялан аса килеççĕ
Аттепе савăннисем.
Вăл килсен – тулли сĕтел,
Савнăç пулнă ачасен.
Вăхăчĕ пулман аннен,
Кунĕпехчĕ вăл ĕçре.
Эпир юлнă иккĕнех,
Турри пулăшнă пулех.
Каçхине те вăл ĕçлет,
Эпир – кăмака çинче.
Сĕтел çинче çĕр улми
Йăмăкпа иккĕн валли.
Кайнă чух мана хушать:
«Йăмăкна пăхас пулать».
Ыйтать вара килсенех:
«Пурăнатăр-и?» – тесе.
Иртсе кайрĕç ку çулсем,
Çитĕнтĕмĕр майĕпе.
Никам та ку нушана
Ан куртăрччĕ нихçан та.
Тав Турра, сывах паян
Эпĕ те, ман йăмăк та.
Савăнатпăр киленсе
Хамăрăн мăнуксемпе.

**Елизавета ОХЛИНА.**

**Катькас ялĕ.**

**Наци проекчĕ**

# Библиотекăна çемйипех çӳреме меллĕ

КУЛЬТУРА
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ



Çемье яланах ачапа кĕнеке хушшинчи çыхăнăвăн чи пĕлтерĕшлĕ сыпăкĕ пулнă. Ку халĕ те çаплах. Шăпах ĕнтĕ çемьере ачан кĕнекесем енне туртăмĕ çирĕпленсе йĕркеленет, кĕнеке вулас туйăм вăй илсе пырать. Кунта аслисен тĕслĕхĕ пысăк вырăн йышăнать.

Кун пирки нумай çырнă тата каланă. Енчен те эпир ача кĕнеке вулатăр тетпĕр пулсан, унпа юнашар кĕнеке вулакан ашшĕ-амăшĕ пулмалла. Кĕнеке вуласси аслисен пурнăç йĕркине кĕнĕ пулсан кăна ача çакна ăша хывать, хăй те кĕнеке енне туртăнма пуçлать. Ашшĕ-амăшĕн килĕнче илнĕ туртăмсем кайран ача ӳссен унăн хăйĕн çемйинче те пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Перловсен çемйи – Муркашри А.Г. Николаев ячĕллĕ ача-пăча библиотекин чи активлă вулавçисенчен пĕри **(сăн ӳкерчĕкре).** Ашшĕ Владимир Игоревич, амăшĕ Надежда Владиславовна тата Муркаш шкулне 2-мĕш класа çӳрекен Мария хĕрĕпе «Путене» ача садне çӳрекен 2 çулхи Екатерина библиотекăра яланах пĕрле. Хаваспах çӳреççĕ кунта вĕсем.

Владимир Игоревичпа Надежда Владиславовна ачаранах кĕнекесемпе туслă пулнă, ача-пăча библиотекине хаваспах çӳренĕ.

«Савăнсах çӳреттĕмĕр кĕнекесем патне библиотекăна. Кунти ĕçченсем пире чи интереслĕ кĕнекесем сĕнетчĕç. Писательсемпе тĕл пулусем питĕ интереслĕ иртетчĕç. Асра юлмалли ытти мероприяти те сахал мар пулнă, – аса илеççĕ Перловсем хăйсен ачалăх çулĕсене. – Халĕ вара эпир кунта хамăрăн ачасене илсе çӳретпĕр. Библиотека сăн-сăпачĕ тĕпрен çĕнелсе улшăннăшăн питĕ савăнатпăр. Тĕслĕх библиотекăра халĕ ачасене те, аслисене те пур енлĕ аталанма мĕнпур услови туса панă».

Паллă ĕнтĕ, «Культура» наци проекчĕ шайĕнче пирĕн библиотекăн сăн-сăпатне тĕпрен çĕнетсе улăштарма май килнишĕн ытларах савăнакансем – ачасем. Куллен библиотекăна 200-е яхăн ача килсе çӳренĕ вĕт-ха. Халĕ вара, библиотека хăйĕн статусне улăштарса тĕслĕх библиотека пулса тăнă хыççăн, кунта пушă вăхăта усăллă та интереслĕ ирттерме кăмăл тăвакансем ытларах пуласси пачах иккĕлентермест.

Наци проекчĕ шайĕнче тĕслĕх библиотека йĕркелеме пире федераци бюджетĕнчен кăçал 5 млн тенкĕ уйăрса панă. Вăл шутран 1 млн тенкĕ библиотекăри кĕнекесен фондне пуянлатма, периодика изданийĕсем çырăнма уйăрнă. Пĕтĕмпе 2043 экземпляр тĕрлĕ кĕнеке туяннă.

Çавăн пекех халĕ кунта çемçе сĕтел-пукан та, корпус сĕтел-пуканĕ те çĕнни. Кунсăр пуçне çĕнĕ оборудовани – килти планетари, телескоп, интерактивлă урай, виртуаллă чăнлăх куçлăхĕсем, графика планшечĕсем, ноутбуксем, ЖК-телевизор, цифра фотоапарачĕ, видеокамера, микрофонсем, веб-камера, музыка центрĕ, оргтехника, сĕтел çи вĕренӳ вăййисем, бизиборд, юнашар тăрса сăн ӳкерĕнмелли «Космонавт», «Пĕчĕк принц», «Хунарçă» стендсем тата ыттине те – пĕтĕмпе 4 млн тенкĕлĕх туяннă.

Пурин валли те вăхăта усăллă ирттерме майсем пур. Ятарлă зонăсем йĕркеленĕ: «Шанчăк планети» консультаципе методика центрĕ, «Çăлтăр çулĕ» выставка зони, «Пĕлӳ планети» вулав зони, ача-пăчан «Пĕчĕк принц планети» уçлăхĕ, нумай функциллĕ «Ӳсĕм планети» аталану зони. Ачасемпе çул çитмен çамрăксем валли «Юмах» театр студийĕ те, çемье вулавĕн «Домовенок» клубĕ те, кану кунĕсен «МультИсторисем» клубĕ те, акăлчан чĕлхин клубĕ те, «Art-студи” кружок та, волонтерсен шкулĕ те пур. Ачасен пукане театрĕ те ĕçлет.

Нумаях пулмасть тĕслĕх библиотекăна савăнăçлă лару-тăрура уçрăмăр. Пирĕнпе, библиотекăна çӳрекен ачасемпе çак савăнăçа пĕрле пайлама республика Пуçлăхĕ Олег Николаев та кăмăл турĕ. Ытти яваплă çынсем те пулчĕç. Тĕслĕх библиотека хута кайни ачасемшĕн те, вĕсен ашшĕ-амăшĕшĕн те республикăри Телейлĕ ачалăх çулталăкĕнчи питех те пысăк парне пулчĕ тесе шутлатăп.

Библиотекăра пурне те хапăл туса кĕтетпĕр. Пурте кунта хăйĕншĕн кирлине, усăллине тупма пултарать.

**Елена НАЛИМОВА,**
**ача-пăча библиотекин**
**заведующийĕ.**

**Астăвăм**

# Çĕнтерĕве пĕрле çывхартнă

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе вăхăт сахал мар иртрĕ. Апла пулин те вăрçă çулĕсем халăх асĕнчен нихăçан та тухмĕç. Ытла та хакла ларнă вăл. Аслă Çĕнтерĕве вара çынсем фронтра та, тылра та пĕрле çывхартма тăрăшнă.

Тивĕш тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ тата кунта ĕçлесе пурăннă çынсем те Çĕнтерĕве туптама хăйсен тӳпине хывнă. Вĕсенчен хăшĕсем пирки каласа парасшăн та эпĕ.

**Александр Григорьевич Григорьев.** 1917 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче çуралнă. 1929 çулта Тивĕшри хресчен çамрăкĕсен шкулĕн 4-мĕш класне вĕренсе пĕтернĕ. 1930 – 1939 çулсенче «Тиуши» колхозра вăй хунă. 1941 çулта Ишлей МТС-ĕнче трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах фронта тухса кайнă. 1941 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса 1942 çулхи март уйăхĕччен Горький хулинчи автомотоучилище курсанчĕ пулнă. Çапăçусене 1942 çулхи март уйăхĕнчен тытăнса хутшăннă. 54-мĕш уйрăм батальон йышĕнче çапăçнă. Аманнă. 1942 çулхи сентябрьтен – 1150-мĕш стрелковăй полк автоматчикĕ. 1942 çулхи октябрьтен тытăнса 1943 çулхи январьччен 215-мĕш стрелковăй полк шутĕнче пулнă. 1945 çулхи январь – апрель уйăхĕсенче 548-мĕш миномет полкĕнче, хыççăн 1946 çулхи апрельччен 62-мĕш гварди стрелковăй полк йышĕнче пулнă.

1946 çулта тăван киле таврăнсан колхозра мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ. 1952 – 1956 çулсенче Муркаш МТС-ĕнче тракториста тăрăшнă. 1956 – 1987 çулсенче «Тиуши» тата Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозсен кормозапарникĕнче ĕçленĕ.

Вăрçă çулĕсенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн «Çапăçури тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн», «Паттăрлăхшăн» медальсем илме тивĕçнĕ. Çавăн пекех ăна «Тăван çĕршывăн 1941 – 1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 20 çул» юбилей медалĕпе наградăланă. 1979 çулта «Ĕç ветеранĕ» ят панă.

**Александра Ермолаевна Григорьева (Иванова)** 1920 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче Етĕрне уесне кĕрекен (Шупашкар районĕ) Турикасси ялĕнче çуралнă. Шупашкар районĕнчи Янăшри пуçлăмăш шкулăн 2 класне вĕренсе пĕтернĕ.

Хăйĕн ĕç биографине Янăш ял Советĕнчи «Люцерна» колхозра пуçланă. 1941 çулта «Канаш – Муром» чукун çулне тунă çĕрте ĕçленĕ. 1942 – 1943 çулсенче Сăр юхан шывĕ хĕрринче хӳтĕлев сооруженийĕсем тунă çĕрте тăрăшнă.

1943 – 1947 çулсенче – «Люцерна» колхоз колхозникĕ. «Тиуши» колхозра 1947 – 1972 çулсенче ĕçленĕ. 1972 – 1995 çулсенче Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозра тăрăшнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ. 1998 çулта ăна «Тăван çĕршывăн 1941 – 1945 çулсенчи Аслă вăрçи çулĕсенчи хастар ĕçшĕн» медаль парса чысланă. 1978 çулта «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» палла тивĕçнĕ. Çавăн пекех унăн ĕç ветеранĕн (1994 çул) тата ача амăшĕн 2-мĕш степень (1962 çул) медалĕсем те пулнă.

**Лев КРАСНОВ.**

# Паллă географ ячĕпе – Асăну хăми

Нискасси вăтам шкулĕн çурчĕ çинче географи наукисен докторĕ Емельян Арчиков профессор ячĕпе савăнăçлă лару-тăрура Асăну хăми уçнă. Вырăс географи обществин Чăваш регион уйрăмĕ йĕркеленĕ мероприятие Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Эмир Бедертдинов тата яваплă ытти ĕçчен, округ администрацийĕн представителĕсем, Нискасси шкулĕн педагогĕсемпе вĕренекенĕсем, ученăйăн вĕренекенĕсемпе тăванĕсем, юлташĕсем, ял çыннисем хутшăннă.

Емельян Арчиков Нискассинче çуралса ӳснĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ, педагог, ăславçă тата Чăваш Республикин географи аслă шкулне йĕркелекенĕ пулнă. Ун пирки вырăс географи обществин Чăваш регион уйрăмĕн председателĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн кафедра заведующийĕ Инна Никонорова каласа кăтартнă. Хамăрăн паллă ентешсене асра тытни, вĕсене сума суни çĕршыври Педагог тата наставник çулталăкĕнче уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулнине асăннă. Емельян Арчиков пуçласа Чăваш Енре географи аслă шкулне уçнă. 30 çул ĕнтĕ шкул географи, экологи, çĕр йĕркелĕвĕ, туризм сферисенче ăста кадрсем пĕтĕм Чăваш Ен валли кăна мар, Раççейăн пур регионĕ валли те хатĕрлет.

Нискасси вăтам шкулĕн директорĕ Алексей Дмитриев çак паллă пулăмпа пурне те саламланă, шкул коллективĕ паллă ентешĕмĕр ятне тивĕç пулассине шантарнă.

Паллă ученăй юлташĕсем тата вĕренекенĕсем – географи наукисен кандидачĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ экологĕ Федор Карягин, «Присурский» патшалăх заповедникĕн ертӳçи Евгений Осмелкин, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн кафедра доценчĕ Анна Гуменюк, историпе географи факультечĕн декан çумĕ Марина Вишневская тата ыттисем ентешĕмĕр ĕçре тата кулленхи пурнăçра мĕнле пулнине аса илнĕ.

**Владислав ШАПОШНИКОВ**
**хатĕрленĕ.**

Нацпроект

# Çул тип-тикĕс те такăр

БЕЗОПАСНЫЕ КАЧЕСТВЕННЫЕ ДОРОГИ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ



«Кăçалах кун пек такăр çулпа çӳреме тытăнасса ĕненменччĕ, мĕншĕн тесен районти ертӳçĕсенчен унччен яланах «çитес çул тума тăрăшатпăр, бюджетра укçа пăхса хăваратпăр» тенине илтме тивнĕ. Асфальт çулĕ мар, унăн хĕрри такăртарахчĕ çуллахи вăхăтра. Район хаçатне те малтанхи çулсенче пĕрре мар çырнăччĕ ку ыйтупа, мĕншĕн тесен çулĕ чăнах та питĕ япăхса кайнăччĕ. Тавах Муркаш муниципалитет округ ертӳçине Алексей Матросова, ытти ертӳçĕне апашсен ыйтăвне те шута хунăшăн», – теççĕ Отаркка ялĕнче пурăнакансем, кунсеренех ĕçе машинăпа çак çулпа çӳрекенсем.

«Тойкилтĕ – Кĕртекасси» çулăн 2 км тăршшĕ лаптăкĕ çинче «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕпе юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Çĕнĕ асфальт сарнă ĕнтĕ, халĕ строительсем çул хĕррисене йĕркене кĕртессипе, çирĕплетессипе тимлеççĕ.

Кунта «Дорсервис» пĕрлешӳ ĕçченĕсем вăй хураççĕ, ĕçе хăвăрт пурнăçлаççĕ. Техника çителĕкли те тӳрех курăнать – темĕнле ĕç тума май параканнини те пур, харăсах пилĕк-ултă тĕрлĕ транспорт хатĕрĕ ĕçленине иртен-çӳрен чылайăшĕ асăрхарĕ пулĕ. Çавăнпа та контрактра палăртнă срокчен, август уйăхĕччен, строительсем кунти ĕçе пĕтĕмпех вĕçлессе шанчăк пур.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

# Çулсене хăвăртрах туса пĕтерĕç

Чăваш Ене çул-йĕр объекчĕсене маларах хута яма хушма укçа-тенкĕпе тивĕçтерни. Федераци бюджетĕнчен пирĕн республикăна 1,2 млрд тенке яхăн уйăрса панă.

Çак укçа-тенке бюджет кредичĕн мелĕпе уйăрнă. Вăл çулсем тăвас, реконструкцилес тата социаллă пĕлтерĕшлĕ объектсене хута ярас ĕçсене малараx вĕçлеме май парĕ. Çак сумма кăçал «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче пурнăçлакан ĕçсене хăвăртрах туса иртterме май парать.

«Раççей Федерацийĕн регионсене аталантарассин патшалăх комитечĕн президиумĕн (штабĕн) ларăвĕн протоколĕпе Чăваш Енри 49,4 км тăршшĕ автоçулсене тата искусствăлла майпа тумалли сооруженисене тивĕçлĕ шая çитерме 1 млрд та 188 млн тенкĕ бюджет кредитне çирĕплетнĕ. Çак укçа-тенкĕ регион тата муниципалитет шайĕнчи çул-йĕр инфраструктурине çĕнетме кайĕ», – ăнлантарнă Чăваш Ен транспорт тата çул-йĕр министрĕ Владимир Осипов.

Хушма укçа-тенкĕ уйăрнăран кăçал капиталлă юсав тума пусланă çулсем хута кайĕç. Кунсăр пуçне проектпа смета документацийĕ тата патшалăх экспертизин пĕтĕмлетĕвĕ хатĕррине кура республикăри ытти хăш-пĕр çула та юсама май пулĕ.

Палăртса хăвармалла, укçа-тенкĕн пĕр пайне «Сура» автоçулăн Муркаш муниципалитет округ территорийĕнчи икĕ лаптăкне юсама уйăраççĕ (км 0+016 – км 0+772, км 2+176 – км 8+880).

**Чăваш Республикин патшалăх влаç органĕсен порталĕнчен.**

Оринин халăх театрне – 105 çул

# «Театр маншăн пулăшу эликсирĕ пекех»



Кӳршĕ Элĕк районĕнче çуралса ӳснĕ Наталия Чебакова **(сăн ӳкерчĕкре)** – Оринин халăх театрĕн çамрăк артисчĕсенчен пĕри.

Çапла, Наталия Муркаш тăрăхĕнчен мар, вăл Писĕп ялĕнчен. Пĕчĕкрен çӳренĕ шкулта 9 класс пĕтернĕ хыççăн вăл Оринин вăтам шкулне вĕренме куçнă.

«Вуннăмĕш класра вĕреннĕ чухне шăпах Оринин халăх театрĕнче пĕр роль валли çын кирлине пĕлтерчĕç. Манăн каяс шухăш пуррине каласан пырса пăхма сĕнчĕç. Кайрăм. Илчĕç», – пуçларĕ калаçăва Наталия.

«Икĕ каччăн пĕр шухăш» спектакльте режиссер ăна Таня рольне шанса панă.

«Таня – çивĕч хĕр, характерпа мана çывăх пулчĕ», – палăртрĕ çамрăк артистка хăйĕн пĕрремĕш ролĕ пирки ыйтсан.

Тĕрĕссипе каласан вăл пĕрремĕш роль пулман темелле. Наталия шкулта вĕреннĕ чухне Дездемона рольне те калăпланă иккен. Çапах та пысăк сценăсем çинче мар, шкул сцени çинче вылянă. Тата роле вырăсла вылямалла пулнă. Таня ролĕпе вара Наталия халăх умне тухнă.

«Чăвашла сăмахсене вĕренме те çăмăлрах – тăван чĕлхепе-çке-ха. Пĕтĕмпех астуса юлма тăрăшнă репетицисенче. Действине кура астуса юлатăп та – сăмахĕ тухса пырать, – тет вăл. – Оринин халăх театрĕнче хăй вăхăтĕнче манăн кукаçи те вылянă, анне енчи тăван та, вăл вара – педиатр врач».

Наталия та шкул хыççăн медицина сферине суйласа илнĕ. Халĕ вăл Шупашкарти медицина колледжĕнчен вĕренсе тухать. Студент вăхăтĕнче те театра çӳреме пăрахман – юратнă ĕç, чун киленĕвĕ пултăр тесе шутланă. Çапла вара амăшĕн йăхĕнчи медицинăпа халăх театрĕн артисчĕсен династине малалла тăсаканĕ пулса тăнă.

Шупашкарта вĕреннĕ вăхăтра Наталия репетицисене яланах килсе çӳреме тăрăшнине калать. «Ăсталăха туптамалла», – тет вăл.

Кĕçех ăна «Юрату çунать чĕрере» спектакльти Света ролĕ «çакланать». Света – ялти хĕр, фермăра ĕçлекенскер, лăпкăрах кăмăллă.

«Ку роль те çывăх пулчĕ, çапах та çирĕп кăмăллă хĕрсен ролĕсем ытларах килĕшнине те туйса илтĕм», – палăртрĕ çамрăк артистка.

«Вунçиччĕре çунать чĕре» спектакльте вара Хресчи рольне калăплать: хăравçă хĕр рольне те ăста вылять. Çапах та вăрçă çулĕсенчи вăхăта сцена çинче кăтартма йывăртараххине каларĕ Наталия.

«Сцена çинче вылянă чух зала пăхмастăп. Зал маншăн çук пекех. Чунтан вылятăп», – тет.

Ку таранччен хăш роль ытларах кăмăла кайрĕ-ха тесе ыйтсан, Наталия «Турă пӳрмен юрату» спектакле аса илчĕ.

«Чикан хĕрĕ Русалина ролĕ маншăн ытларах палăрса юлакан роль пулчĕ. Питĕ çирĕп кăмăллă хĕр, унра пысăк вăй-хăват тапса тăрать. Хамăн та пурнăçра çак енсем пур пек туйăнать, çавăнпа çывăхрах пулчĕ пулĕ», – ку роль пирки каланă чухне Наталиян куçĕ те ытларах ялкăшма тытăнни палăрчĕ. Ахăртнех спектакльти сценăсене куç умне кăларчĕ пулĕ.

«Халăх театрĕнче выляни пурнăçра хавхалантарса пырать, кăмăл-туйăм енчен те пулăшса пырать. Эпĕ театра çӳреме тытăнни ултă çул ĕнтĕ. Театр вăл – манăн хобби, пушă вăхăта юратнă ĕçпе тата çав вăхăтрах усăллă иртерни. Театрта чунпа канатăн, йывăрлăхсем çине те урăхларах пăхатăн е вĕсем пирки манатăн. Сцена çинче выляни çын умне шанчăклăн тухса калаçма та пулăшать. Театр маншăн хăйне май пулăшу эликсирĕ пекех. Театра килнĕшĕн ӳкĕнместĕп, савăнатăп çеç. Мана çавăн чухне театра чĕннен пулсан, вĕсем лартнă спектакльсене курса пурнăр унта çул тупаттăмччĕ пулĕ», – пурнăçра театр мĕнле вырăн йышăннине çапла палăртрĕ çамрăк артистка.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Абитуриентсем валли

# Тӳлевсĕр вĕренме кĕрес тесен

Вунпĕрмĕш класран вĕренсе тухнисен тĕллевĕ халĕ – аслă шкула тӳлевсĕр мелпе бюджет вырăнне вĕренме кĕресси. Патшалăх пĕрлехи экзаменĕсенчи балсем пысăках пулмасан вара ку ыйту самаях шухăшлаттарать. Апла пулин те майсем пур.

Темиçе меслет пирки аса илтеретпĕр.

**Пĕрремĕшĕ** – çăмăллăхсемпе усă курса экзаменсемсĕрех – квотăпа е ыттисенчен маларах вĕренме кĕмелли правопа усă курса. Ятарлă квотăпа инвалид ачасем, тăлăх ачасем, ятарлă çар операцийĕнче пулнă е çак вăхăтра унта хутшăнакансен ачисем тата хĕрӳ вырăнсене хутшăннă çар ĕçĕн ветеранĕсем вĕренме кĕме пултараççĕ. Сăмахран, çак категорие кĕрекенсем Чăваш патшалăх университетĕнчи хатĕрлев курсĕсенче те тӳлевсĕрех вĕренеççĕ.

Тепĕр лайăх самант. Предмет олимпиадисен е тата шкул ачисен олимпиадисен е спорт чемпионачĕсен призерĕсемпе çĕнтерӳçисем (список abiturient.chuvsu.ru страницăра) Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕрсен хушма стипенди илсе тăраççĕ – 4 – 10 пин тенкĕ чухлĕ. Каласа хăвармалла, олимпиада çĕнтерӳçисемпе призерĕсем аслă шкула вĕренме кĕме çак кăтартупа 4 çул усă курма пултараççĕ.

**Иккĕмĕш меслет** – харпăр хăйĕн çитĕнĕвĕсемшĕн хушма балл пухса. Сăмахран, асăннă аслă шкултах пĕтĕмлетӳ сочиненийĕшĕн хушма 2 балл параççĕ, волонтер ĕçĕшĕн – 1 – 4 балл чухлĕ, ГТО палли е спорт мастерĕн кандидачĕ пулни хушма 5 балл таран пама пултарать, «хĕрлĕ» аттестат е диплом, е тата ылтăн е кĕмĕл медаль 10 балл таран хушма пулăшать, тĕнче шайĕнчи ăс-тăн е професси пĕлĕвĕн чемпионачĕсенче е Чăваш патшалăх университечĕ хăй ирттернĕ олимпиадăсенче призлă вырăн йышăнни те 10 балл таран хушса парать.

**Виççĕмĕш меслет** – тĕллевлĕ вĕренесси пирки предприятипе килĕшӳ туни. Олимпиадăсенче е ăмăртусенче çĕнтерӳ çуккисем валли – чи лайăх меслет. Тĕллевлĕ майпа вĕренме кĕрекенсен вĕренме кĕмелли балл шучĕ те ыттисенчен пĕчĕкрех, вĕреннĕ вăхăтра вара хушма стипенди те тӳлеççĕ. Кăçал Чăваш патшалăх университетĕнче, сăмахран, çак майпа вĕренме кĕрекенсем валли 420 вырăн уйăрнă.

Пулас врачсен тĕллевлĕ майпа вĕренме кĕрес тесен предприятисен списокĕпе Чăваш Республикин Сывлăх сыхлав министерствин сайтĕнче паллашма пулать, техникăлла специальноçпа вĕренме – Промышленноçпа энергетика министерствин сайтĕнче паллашма е университетăн партнерла предприятийĕсене çитме пулать, журналистика суйласа илес текенсен массăллă информаци хатĕрĕсене е округсен администрацийĕсене çитме ӳркенмелле мар... Документсене епле хатĕрлемеллине



abiturient.chuvsu.ru страницăра ăнлантарса панă.

Тĕллевлĕ майпа вĕренме кĕнисем практикăна та хăйсем килĕшӳ тунă предприятинчех пурнăçлаççĕ, вĕсене предприятире çирĕплетсе панă наставник пулăшать. Çакăн пек майпа вĕренме кĕнин тепĕр лайăх саманчĕ – вĕренсе тухнă хыççăн ĕç вырăнĕ тӳрех пурри.

Абитуриент тĕллевлĕ майпа вĕренме кĕрес текенсен конкурсĕпе вĕренме кĕрейменсен унăн июнĕн 25-мĕшĕччен документсене тăратса, пурин валли те йĕркеленĕ конкурса хутшăнма вăхăт пур.

**Наталия НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Чыслав

# Муркаш çĕрĕн хастар ĕçченĕсем

***Округра 68-мĕш хут ирттернĕ Акатуй уявĕ пирки хаçатăн иртнĕ номерĕнче çырса кăтартнăччĕ. Ял хуçалăхĕнче кăна мар, тĕрлĕ отрасльте ырми-канми вăй хуракансене унта чысларĕç-саламларĕç. Паянхи кăларăмра сире Муркаш ятне-сумне çӳле çĕклекен çак хастар ĕçченсемпе паллаштаратпăр.***

Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн, культурăна аталантарма тӳпе хывнăшăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕпе килĕшӳллĕн **«Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята** тивĕçрĕ:

**– Ирина Васильевна ПЕТРОВА,** ачасен хушма вĕренĕвĕн «Муркашри Ф.С. Васильев ячĕллĕ искусство шкулĕ» муниципалитет автономи учрежденийĕн преподавателĕ.

* * *

Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн тата агропромышленноç комплекне аталантарма хайсен тӳпине хывнăшăн **Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвне** илчĕç:

**– Ираида Андреевна ЛЕОНТЬЕВА,** «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн экономист-бухгалтерĕ;

**– Сергей Владимирович ХАРИТОНОВ,** «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн – ăратлăх завочĕн тракторист-машинисчĕ.

* * *

Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн тата агропромышленноç комплекне аталантарма хайсен тӳпине хывнăшăн **Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине** çаксем илме тивĕçрĕç:

**– Николай Валерианович ИВАНОВ,** «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинисчĕ;

**– Ирина Владимировна МЕРЛОВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществин çăмарта йышăнаканĕ;

**– Елена Святославовна ПАВЛОВА,** «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн бухгалтерĕ;

**– Димитрий Леонидович ПОРФИРЬЕВ,** Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинисчĕ;

**– Игорь Георгиевич СКВОРЦОВ,** хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертӳçи;

**– Сергей Анатольевич СМИРНОВ,** «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн – ăратлăх завочĕн Çатракассинчи ĕне фермин холодильник установкисене юсакан слесарĕ;

**– Эльвира Геннадьевна ФИЛИППОВА,** Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн уй-хир бригадин склад заведующийĕ;

**– Георгий Германович ШУРНОВ,** «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп инженерĕ.

* * *

**Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Тав çырăвне** тивĕçнисем çаксем пулчĕç:

**– Ольга Михайловна ИВАШКОВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществин тĕп бухгалтер çумĕ;

**– Надежда Васильевна ЛУКОЯНОВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществин çăмарта йышăнаканĕ;

**– Ирина Алексеевна МИХАЙЛОВА,** «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн кадрсен инспекторĕ;

**– Алексей Александрович ОБРУЧНИКОВ,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществин операторĕ.

* * *

Культурăна аталантарма тӳпе хывнăшăн **Чăваш Республикин Культура, национальноç ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин Хисеп грамотине** илме пултарчĕ:

**– Екатерина Витальевна ПРОКОПЬЕВА,** Мăн Хураçка ял библиотекин заведующийĕ.

* * *

Культурăна аталантарма тӳпе хывнăшăн **Чăваш Республикин Культура, национальноç ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин Тав çырăвне** илме тивĕç пулчĕç:

**– Владимир Валерианович ЖЕЛЕЗНОВ,** Тойкилтĕ Культура çуртĕн «Хĕлхем» эстрада халăх ансамблĕн художество ертӳçи;

**– Римма Павловна ФЕДОРОВА,** Мăн Токшик ял клубĕн «Тăванлăх» фольклор халăх ансамблĕн хормейстерĕ.

* * *

**«Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» удостоверени** илчĕç:

**– Светлана Геннадьевна БАШКИРОВА,** Панклири фельдшерпа акушер пункчĕн фельдшерĕ;

**– Регина Петровна БЫКОВА,** Атапай ял клубĕн заведующийĕ;

**– Елена Валентиновна ИВАНОВА,** Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн тĕп эксперт специалисчĕ;

**– Валентина Алексеевна СПИРИДОНОВА,** «Газпром газораспределение г. Чебоксары» акционер обществин филиалĕн мастерĕ;

**– Владислав Леонидович ШАПОШНИКОВ,** «Çĕнтерӳ ялавĕ» Муркаш район хаçат редакцийĕн редакторĕ.

* * *

Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн **Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине** илме тивĕç пулчĕç *(сăн ӳкерчĕкре)*:

**– Вера Николаевна НИКИФОРОВА,** Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп бухгалтерĕ;

**– Людмила Алексеевна ОХЛИНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществин çăмарта йышăнаканĕ;

**– Светлана Николаевна СТЕПАНОВА,** «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн вылăх пăхаканĕ;

**– Ольга Филипповна СУВОРОВА,** «Çĕнтерӳ ялавĕ» Муркаш район хаçат редакцийĕн корректорĕ.

* * *

Вырăнти самоуправлени органĕсене аталантарма тӳпе хывнăшăн тата общество̆лла ĕçре активлă пулнăшăн **Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине** тивĕçрĕ:

**– Александр Платонович ДАВЫДОВ,** депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕ.

* * *

2023 çулхи çурхи уй-хир ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе маттур ĕçченсен пысăк ушкăнне **Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн дипломĕпе** чысларĕç. Ĕçре палăрнисен шутĕнче çаксем:

**– Владимир Николаевич БАШКИРОВ,** «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ;

**– Николай Владиславович ЕГОРОВ,** Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторисчĕ;

**– Николай Константинович КОВАЛЕВ,** «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторисчĕ;

**– Сергей Владимирович КОНДАКОВ,** «Путь Ильича» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн тракторист-машинисчĕ;



**– Константин Валерьевич КОНСТАНТИНОВ,** «Р.О.С.С. – Агро» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн тракторист-машинисчĕ;

**– Болеслав Николаевич НИКИТИН,** Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн механизаторĕ;

**– Евгений Алексеевич ПАВЛОВ,** «Гея» чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕн çумĕ;

**– Артем Николаевич ПАЙЗЕРОВ,** А.А. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕн тракторисчĕ;

**– Алексей Алексеевич ПАЙКОВ,** «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинисчĕ;

**– Светлана Гурьевна САВЕЛЬЕВА,** «Сокол» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн тĕрлĕ ĕç пурнăçлаканĕ;

**– Александр Александрович СЕМЕНОВ,** Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинисчĕ;

**– Виталий Васильевич СТЕПАНОВ,** «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн – ăратлăх завочĕн водителĕ;

**– Григорий Владимирович СТЕПАНОВ,** «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинисчĕ;

**– Николай Сергеевич ТЕРЕНТЬЕВ,** А.А. Афанасьева хресчен (фермер) хуçалăхĕн тракторисчĕ;

**– Николай Альбертович УШАКОВ,** Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн хушма рабочийĕ;

**– Владимир Валерьевич ФЕДОРОВ,** Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ;

**– Владимир Владимирович ФЕДОРОВ,** «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн автомобиль водителĕ;

**– Сергей Вениаминович ФЕДОРОВ,** Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ;

**– Евгений Витальевич ЯКИМОВ,** «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн – ăратлăх завочĕн тракторист-машинисчĕ;

**– Владимир Иванович ЯКОВЛЕВ,** «Мичурин яч. хис. агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă общество механизаторĕ.

* * *

Суту-илĕве аталантарма тӳпе хывнăшăн тата потребительсен кооперацийĕнче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн **Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн Хисеп грамотине** тивĕçрĕ:

**– Олег Михайлович ПЕТРОВ,** Муркаш райпо правленийĕн председателĕ.

* * *

Физкультурăпа спорта аталантарма тӳпе хывнăшăн, арçынсен волейбол командисен **Чăваш Республикин 2022 – 2023 çулсенчи чемпионачĕн пĕрремĕш лигинче çитĕнӳсем тунăшăн çаксем Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн Тав çырăвне** илме пултарчĕç:

**– Алексей Витальевич АНИСИМОВ;**

**– Марат Фаридович БЕК-БУЛАТОВ;**

**– Евгений Вячеславович ГОЛОМЫСОВ;**

**– Александр Александрович ЕРМОЛАЕВ;**

**– Кирилл Владимирович ЕРМОЛАЕВ;**

**– Константин Анатольевич НИКИФОРОВ;**

**– Алексей Сергеевич ОЖИГАНОВ;**

**– Дмитрий Алексеевич РЖАНОВ;**

**– Артур Вячеславович РЫЖКОВ;**

**– Александр Юрьевич СОРОКИН;**

**– Матвей Юрьевич ЦВЕТКОВ.**

* * *

Округăн общество пурнăçне активлă хутшăннăшăн **«Единая Россия» партин Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕн Тав çырăвне** тивĕçнисем:

**– Николай Валерианович БЕЛОВ,** Чуманкасси территори пайĕн пуçлăхĕ;

**– Ирина Юрьевна БЫРКИНА,** Турайри ял Культура çуртĕн заведующийĕ;

**– Алиса Николаевна ИВАНОВА,** Оринин территори пайĕн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ;

**– Светлана Николаевна МАВЕЕВА,** «Единая Россия» партин пуçламăш уйрăмĕн секретарĕ;

**– Светлана Алексеевна МИХАЙЛОВА,** Оринин территори пайĕн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ.

* * *

**Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотине** илнисем:

**– Венера Аполлоновна ВАСИЛЬЕВА,** Орининти ял Культура çуртĕн директорĕ, эстрада юррисен «Расна» халăх ансамблĕн художество ертӳçи;

**– Ирина Вавиловна НИКОЛАЕВА,** Муркаш муниципалитет округĕн библиотекăсен централизациленĕ системин директорĕн çумĕ;

**– Никита Ильич ПАВЛОВ,** Муркаш муниципалитет округĕн Оринин халăх театрĕн артисчĕ;

**– Наталия Витальевна ЧЕБАКОВА,** Муркаш муниципалитет округĕн Оринин халăх театрĕн артисчĕ.

* * *

Чи лайăх страхователсене Росгосстрахăн **Чăваш Республикинчи филиалĕн директорĕн Тав çырăвĕсене** парса хавхалантарчĕç. Ку чыса çаксем тивĕçме пултарчĕç:

**– Николай Давыдович ИВАНОВ,** Оринин ялĕнче пурăнакан;

**– Александр Николаевич НИКОЛАЕВ,** Йӳçкасси ялĕнче пурăнакан;

**– Вера Алексеевна ФЕДОТОВА,** Тивĕш ялĕнче пурăнакан.

* * *

**Чăваш Республикинчи** профсоюз организацийĕсен «Чувашрессовпроф» **пĕрлешĕвĕн Хисеп грамотине** тивĕçнисем çаксем:

**– Анна Геннадьевна АВЕРКИЕВА,** Чуманкасси территори пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ;

**– Валерий Вячеславович ЗАМКОВ,** «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторисчĕ;

**– Валентина Геннадьевна ЛЮБИМОВА,** Çатракасси территори пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ;

**– Дина Феоктистовна ТИМОФЕЕВА,** Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп зоотехникĕ.

* * *

**Агропромышленноç комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюзĕн Хисеп грамотине тивĕç** пулнисем:

**– Тамара Витальевна ПЛАТОНОВА,** Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн рабочийĕ;

**– Артур Виссарионович ЧИЖОВ,** «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн рабочийĕ.

* * *

**Культура ĕçченĕсен пĕтĕм Раççей профсоюзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн Хисеп грамотине** çаксем тивĕçрĕç:

**– Ольга Вячеславовна ГРИГОРЬЕВА,** ачасен Муркашри Ф.С. Васильев ячĕллĕ искусство шкулĕн директорĕ;

**– Виктор Валерьянович СЕРГЕЕВ,** Йӳçкассинчи ял Культура çуртĕн заведующийĕ;

**– Анжелика Васильевна УГАРОВА,** Катькас ял библиотекин заведующийĕ.

Пирĕн паллă ентешсем

# Çĕр ĕçĕнче тăватă ордена тивĕçнĕ

Муркаш округĕнче çĕршыва хÿтĕлес, ачасене тивĕçлĕ воспитани парас, культурăна тата сывлăх сыхлавне аталантарас ĕçре палăрнă çынсем сахал мар. Вĕсем кашниех хăйсен ĕçĕсемшĕн патшалăхăн пысăк наградине тивĕçнĕ. Ял хуçалăх производствинче тăрăшнипе 4 орден илекенсем вара... Кун пекки пĕрре кăна. Вăл – округăн тава тивĕçлĕ гражданинĕ, Шетмĕпуç территори пайĕнчи Катăкуйĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ Алексей Петров. Çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче вăл 95 çул тултарчĕ. Çав ятпа Тури чăвашсен музейĕнче ăна халалланă выставка уçăлчĕ. Ăна уçма А. Петровăн мăнукĕпе Александр Олеговичпа пиччĕшĕн – Алексейăн – мăшăрĕ Татьяна Ивановна тата вĕсен ачисем хутшăнчĕç. Тĕл пулура Чăваш Республикинчи АПК ветеранĕсен канашĕн районти уйрăмĕн ертÿçи Валерий Вязов тата ветерансен пысăк ушкăнĕ пулчĕ.




Паллă ентеш ячĕпе хатĕрленĕ экспозицие уçнă çĕре муниципалитет округ администрацийĕн ĕç производствипе тĕрĕслев пайĕн пуçлăхĕ Александр Краснов пычĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Алексей Петрович пек хастарсем йывăрлăх умĕнче пуç усманнине, хамăр енре пурăнакансем çине ырă витĕм кÿнине, çамрăк ăрушăн ялан тĕслĕх пулнине палăртрĕ.

– Эсир пирĕн округăн ылтăн фончĕн пĕр сыппи, анчах çирĕп сыпă. Эсир хăвăрăн вăхăта шеллемесĕр ырă малашлăхшăн тăрăшса ĕçленине эпир паянхи экономика аталанăвĕнче куратпăр. Муркаш ене çирĕп аталанма çул уçса панишĕн пысăк тав сире, – терĕ вăл А. Петровăн экспозицине уçма хутшăннă мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсене хăйĕн сăмахĕсене юбиляр патне çитерессе шанса.

**Пурнăç çулĕ**

Тури чăвашсен музейĕн ĕçченĕ, вăлах районти ветерансен пĕрлĕхĕн ертÿçи Елена Максимова пухăннисене малтанах юбилярăн кун-çулĕпе паллаштарчĕ.

– Районти паллă çынсем хушшинче Алексей Петров уйрăм вырăн йышăнать. Хăйĕн ĕмĕрĕнче вăл йывăрлăхран хăраманнине, пурнăçлама çук йывăр ĕç пулманнине хăйĕн тăрăшулăхĕпе кăтартса панă. Ялти кашни йывăрлăха вăл хăйĕн чĕри витĕр кăларнă, çын ыйтăвне вĕçне çити итлесе тивĕçлĕ хурав пама тăрăшнă, вăй çитнĕ чухлĕ пулăшнă. Йывăрлăхсене ĕçпе çĕнтерсе пыма вĕреннĕскер, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăнхи юхăнчăк хуçалăха çирĕп ура çине тăратнă. Кÿршĕри пĕчĕк колхозсене пĕрлештерсе ыранхи кунпа пурăнакан Мичурин яч. хис. пĕрлешÿллĕ хуçалăх йĕркеленĕ. Унăн пурлăхпа техника базине вăйлатса тăрăшуллă ĕçпе виçĕ хутчен коммунистсен партийĕн тĕп комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне çĕнсе илнĕ. Тырă-пулăн кашни пучаххине шута илсе 22 çул хушшинче вăл вăхăтра чи пысăк тухăçлă хуçалăх туса хунă, – паллаштарчĕ производствăри ÿсĕмĕсемпе Елена Михайловна.

Вăтам çулсенчи вăй питти арçын пĕрлешÿллĕ хуçалăх ĕçĕпе çеç лăпланса ларман. Унăн тĕллевĕнче ялта çĕр ĕçлесе пурăнаканăн пурнăç условийĕсене тĕпрен лайăхлатасси пулнă. Çак тĕллевпе вăл кашни кун ирхи 3 сехетре лашапа колхоз уйĕсемпе, фермисемпе çаврăнса тухса колхозниксем валли череtлĕ ĕç кунне наряд хатĕрленĕ.

– Çакăн пек ертÿçĕпе ĕçлеме çăмăлччĕ. Вăл çирĕп пулни пире ĕç çине алă сулма памастчĕ. Алексей Петрович кирек камран та ыйтма, ăна ăнланма пĕлетчĕ, хăйĕнчен ыйтсан туллин хуравлама тата пултарнă чухлĕ пулăшма тăрăшатчĕ, специалистсене хамăра пăхăнса ĕçлекенсемпе йĕркеллĕ калаçма тата вĕсем хускатакан ыйтусемпе туллин паллашма сĕнетчĕ, пурнăçланă кашни ĕçпе вăхăтра паллашса тăратчĕ. Унăн çапла ĕçлес енĕсем манăн пурнăçра ырă йĕр хăварчĕç, вĕсем пирки эпĕ хуçалăх зоотехникĕнче ĕçленĕ çулсенче самантлăха та манмарăм, паян та асра тытатăп, – аса илĕве хуçалăх ĕçченĕсен куçĕпе пăхса хакларĕ Луиза Александрова ветеран хуçалăх ертÿçи ытларах ялан чăвашла калаçма тăрăшнине уйрăммăн палăртса.

Республикăри АПК ветеранĕсен канашĕн районти уйрăмĕн ертÿçи Валерий Вязов Алексей Петрович пирки хăйĕн вĕрентекенĕ тесех каларĕ. «40 – 50 çул каялла епле паллашрăмăр, паян та çав туслăха çирĕп тытса пыратпăр. Ĕлĕкхи пекех час-часах тĕл пулатпăр, тĕрлĕ ыйтăва сÿтсе яватпăр, пурнăçланă ĕçсене тишкеретпĕр, тухăçлăрах ĕçлемелли çулсене шыратпăр. Алексей Петрович кашни ыйтупах туллин калаçма, усăллă сĕнÿсем пама пултарать. Вăл çак шайри специалист пулнинче унăн мăшăрĕн, нумай çул Шетмĕпуçĕнчи ветучастока ертсе пынă Римма Михайловнан тÿпи те пур. Чей курăкĕ пухма юратаканскер епле тутлă чей вĕретсе ĕçтернине нихăçан та манас çук», – терĕ аслă юлташĕсене хисеплесе те тав туса Валерий Иванович.

**Колхозран – райпона**

Пĕрлешÿллĕ хуçалăх вăйĕпе тăван ен аталанăвне пысăк тÿпе хывнă Алексей Петровича ырăпа палăртмасăр майĕ çуках.

– Нимрен пахи – ялсенче пурăнакансем улăм витнĕ пÿртсенчен тухса пĕтрĕç. Вĕсем çĕнĕ условисенче пурăнма хăнăхрĕç, малашлăха шанса тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç, – тенĕччĕ маларах хăйĕнпе тĕл пулса калаçнă чух Алексей Петрович ĕç пурнăçĕн никĕсĕнче хăйĕн ятсумĕшĕн тăрăшни тĕп вырăнта пулманнине палăртса.

Пĕрлешÿллĕ хуçалăха ура çине тăратассипе пысăк ĕç туса ирттернĕ ертÿçе 1979 çулта Муркаш райпоне ертсе пыма шанаççĕ. Çак вăхăта вăл тăван хуçалăха техника тĕлĕшĕнчен пуянлăхра хăварать.

Райпора та вăл çулсенче татса паман ыйтусем пулман мар. Нумай чухне çул пулманнипе яла тавар вăхăтра çитеймен. Ялсенчи магазинсем те çĕнĕлĕх ыйтнă. Йывăрлăхсем умĕнче пуç усман председатель 1979 çулта Муркаш райпоне ырă малашлăха шанса ертсе пыма пуçлать. 11 çул ĕçлет вăл асăннă коллективра. Кунта та Катăкуй çынни хăй хыççăн ырă йĕр кăна хăварать. Ыранхи кунпа пурăнакан çĕнĕ ертÿçĕ тăрăшнипе çав çулсенче райпо тытăмĕнчи 25 магазин çĕнĕ тум тăхăнать. Муркашра суту-илÿ çурчĕпе «Сказка» кафе çынсене йышăнма пуçлаççĕ – район центрне çĕнĕ хăт кĕрет. Райпон экономики черетлĕ шая çĕкленет. Суту-илĕве ăнăçлă ертсе пынă А. Петрова 1988 çулта «СССР потребкооперацийĕн отличникĕ» ят параççĕ.

– Алексей Петровича эпĕ ачаранпах пĕлетĕп. Муркаш райповĕнче пĕрле ĕçлеме тÿр килнине те чыс вырăннех хуратăп. Вăл чăн-чăн ĕç çынни пулнине çулсем иртнĕ май çирĕплетсех калайратăп, – терĕ Чăваш Республикин халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Е. Куликова.

**Чыслав**

Шаннă ĕçре ответлăха туйса вăй хунăшăн, çĕр ĕçĕнче тата выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче хура-шурне чылай тÿссе ирттерсе малашлăха пăхса ĕçленĕшĕн, çĕнĕлĕхсене çул панăшăн Алексей Петровича çĕршыв тĕрлĕ çулсенче 4 орденпа, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе те чысланă. Иртнĕ çулсенче вăл «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медаль кавалерĕ пулса тăчĕ.

40 çул ытла Шетмĕпуçĕнчи ветучастока ăнăçлă ертсе пынă мăшăрĕ Римма Михайловна та çĕршыв тимлĕхĕсĕр юлман. Хушнă ĕçе паха пурнăçланăшăн ăна тĕрлĕ çулта вырăнти Хисеп хучĕсемсĕр пуçне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă, «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ» ят панă.

– 70 çул пĕрле пурăнса «Юратупа шанчăкшăн» медале тивĕçнĕ кукаçипе кукамай пирĕншĕн те, кĕçĕн мăнуксемшĕн те – эпир çак кунсенче пĕтĕмпе 8-ăн пултăмăр ĕнтĕ – пурнăçăн ырă тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ. Çакна ăнланса хамăр ума çĕнĕ тĕллевсем лартатпăр. Вĕсем пурнăçланасса та шанатпăр – пирĕн урăхла юрамасть, – терĕç кĕçĕн ăру ячĕпе сăмах калаĕ май Александр Олеговичпа Татьяна Ивановна (Алексей Олегович мăшăрĕ). – Вĕсем вĕрентнĕ пек, Катăкуй ялне эпир нихăçан та манмăпăр. Кунта пирĕншĕн йăлтах тăванлăхпа çыхăннă.

– Эпĕ шÿтлеме юрататăп. Çынсемпе ĕçлеме вĕреннипе пĕрлех шÿт ăсталăхне те эпĕ Алексей Петровичран илтĕм, – терĕ шÿт сăмахĕсем çумне юрă парни хушса Алексей Скворцов ветеран.

Тĕл пулура пĕрле ĕçленĕ председателĕн А. Ивановăн (К. Иванов яч. хис. хуçалăх ертÿçи пулнă) тата районти ĕç тăвакан комитетра тăрăшнă В. Любимова аса илĕвĕсене те пухăннисем кăмăлласа итлерĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: Тури чăвашсен музейĕнче А. Петров ячĕпе экспозици уçнă çĕре хутшăннисем.**

Район прокуратуринче

# Саккун пуриншĕн те пĕрре

**Çитменлĕхсене пĕтерме хушнă**

Округăн маневрлă пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн пÿлĕмĕсенче маларах тĕрĕслев ирттернĕ май, пурăнмалли çурт-йĕр, санитарипе эпидемиологи тата пушар хăрушсăрлăх законодательствин требованийĕсене пăснă тĕслĕхсене тупса палăртнă.

Сăмахран, Муркашра вырнаçнă кун пек пÿлĕмсенче вĕри шывпа тивĕçтермелли система, тĕтĕмленнине систерекен ятарлă хатĕрсем пулман, ку пÿлĕмсем вырнаçнă нумай хваттерлĕ çурт тулашĕнче пушар сÿнтерме кирлĕ чухлĕ шывпа тивĕçтермелли майсене пăхса хуман.

Асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕллевпе муниципалитет округ администрацийĕн пуçлăхĕ патне представлени тăратнă. Анчах та çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтермен.

Çавна май район прокуратури тупса палăртнă çитменлĕхсене 12 уйăх хушшинче пĕтĕмпех пĕтерме суда иск заявленийĕпе тухрĕ. Суд йышăнăвĕпе прокурор требованийĕсене тивĕçтернĕ, йышăну мĕнле пурнăçланнине район прокуратури контрольте тытать.

**Наркотик турттаракана арестленĕ**

2023 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче «Мускав – Уфа» М-7 трасса çинче Юнкăпуç ялĕ тĕлĕнче РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн полици сотрудникĕсем Челябинск облаçĕнче пурăнакан 31 çулхи çын тытса пыракан «Мерседес» автомашинăна чарнă. Автомашина салонĕнче пакетсене тултарнă синтетика наркотик япали пĕтĕмĕшле 4 килограмм тупса палăртнă. Ку вăл уйрăмах нумай шутланать. Асăннă фактпа шалти ĕçсен пайĕн следстви органĕ уголовлă ĕç пуçарнă, следстви ĕçĕсем пыраççĕ.

Суд, прокуратура позицине шута илсе, уйрăмах йывăр преступлени тăвакан тĕлĕшпе çирĕп мера – арестлеме йышăнчĕ.

Уголовлă ĕçе тĕпчесси мĕнле пынине район прокуратури контрольте тытать.

**Территори пайĕн пуçлăхне явап тыттарнă**

Вырăнта пурăнакан çын ыйтăвне тивĕçтерсе, район прокуратури граждансен ыйтăвĕсене пăхса тухассипе законодательствăна мĕнле пурнăçланине тĕрĕслерĕ.

Çакна тупса палăртнă. Катькас территори пайĕн пуçлăхĕ гражданинăн 2023 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнчи çĕр ыйтăвĕпе пулнă çырăвне саккунпа палăртнă пек 30 кун хушшинче пăхса тухман. Заявителе çырупа çырса хурав икĕ уйăх ытларах иртсен кăна ярса панă.

Çавна май прокуратура должноçри çын тĕлĕшпе административлă право йĕркине пăсни пирки ĕç пуçарчĕ. Ăна пăхса тухса миравай суд айăплă должноç çыннине 5 пин тенкĕ штраф тÿлеттерме йышăну турĕ. Йышăну саккунлă вăя кĕмен.

Кунпа пĕрлех малашне федераци законодательствине пăснипе çыхăннă кун пек тĕслĕхсене асăрхаттарас тĕллевпе Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн пуçлăхĕн адресĕпе представлени тăратрĕ. Ăна пăхса тухнă май айăплă çынна дисциплинарлă майпа явап тыттарнă.

**А. ГАЛАХОВ,**
**Муркаш район прокурорĕ,**
**юстицин аслă советникĕ.**

Полици хроники 12+

# Каллех суд тенкелĕ кĕтет

Мăн Сĕнтĕр территори пайĕнчи ялта хăрушă ĕç пулса иртнĕ: ытла та хĕрÿ кăмăллă арçынсем тĕл пулнăран çапла пулса тухнă-ши? Унччен те, 2005 çултан тытăнса, судпа пĕрре мар айăпланнă арçын теприне пилĕкĕнчен çĕçĕпе чикнĕ. Ĕçĕ вара нихăшĕн килĕнче те мар, тепĕр çыннăн (хĕрарăмăн) килĕнче пулса иртнĕ. Суранланнă арçынна Муркаша больницăна леçнĕ.

Ку факт тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, следовательсем тимлеççĕ. «Тимĕр алăллă» арçыннăн вара суд йышăнăвне кĕтмелли кăна юлать. Çурăм хыçĕнчи «кутамкки» тата йывăрланасси куçкĕрет.

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Призыв

# Яшсем салтак атти тăхăнаççĕ

**Апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă çурхи призыв вĕçленмен-ха, вăл июлĕн 15-мĕшĕччен пырать. Çак тапхăрта кăçал пирĕн республикăран 1400 призывник тĕрлĕ çар чаçне каять.**

**Призыв мĕнле пынипе Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕпе Владимир КАЗАКОВПА сăмах пуçартăм. Вăл акă мĕн пĕлтерчĕ:**

«Призыв палăртнă йĕркепех иртет. Пирĕн çар комиссариатĕнчен çара ăсатнă граждансем Раççей Федерацийĕн Оборона министерствин пур çар округĕнче те службăра тăма тытăнаççĕ, тĕрлĕ çар чаçĕсенче, Раççей гвардийĕнче те.

Призывниксем çар чаçĕсенче тата вĕренӳ вырăнĕсенче малтан пилĕк уйăх вĕренеççĕ, çар учет специальноçне алла илеççĕ. Хыççăн вара çулталăкран юлнă вăхăтра çар службине пурнăçлаççĕ.

Палăртса хăвармалла, призывника сывлăх тĕлĕшĕнчен çарта службăра тăма вăхăтлăх юрăхсăр тесе çирĕплетнĕ пулсан, çемьере йывăр лару-тăру пулсан (сывăх тăванне пăхмалла чухне тата ăна пăхма урăх никам та çук пулсан), аслă шкулсенче вĕренекен студентсемпе аспирантсене, пĕчĕк ачасем пур тата çав вăхăтрах мăшăрĕ ача кĕтет пулсан (22 эрнерен пĕчĕк мар срок), саккун кăларакан влаçăн пур шайĕнчи депутатсене те, шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕсене, уголовлă ĕç пурнăçлакан тытăм сотрудникĕсене, Росгварди служащийĕсене, таможня органĕсен сотрудникĕсене, пушар хăрушсăрлăх службин ĕçченĕсене çар службинчен отсрочка параççĕ. Çапах та отсрочка илме çак службăсенче вăй хуни кăна çителĕксĕр (депутатсемсĕр пуçне), сотрудникăн хăйĕн ĕç профилĕпе аслă пĕлӳ илни пулмалла.

Раççей Федерацийĕн çарне каяссинчен 27 çул тултаричченхи отсрочка илме пултаракансен йышне хальхи вăхăтра çултаλăкран сахал мар ĕçлекен IT-специалистсене те кĕртнĕ.

Çавăн пекех аслă шкул пĕтернĕ хыççăн çамрăк специалист должноçра ĕçлеме тытăннăранпа çултаλăк ытла иртмен пулсан унăн та çак правопа усă курма пулать.

Ирĕкрен хăтарнисене е ирĕкне чикĕленисене, арестленисене, çак тапхăрта обязательнăй е юсану ĕçне пурнăçлакансене призывпа çара илсе каймаççĕ. Çавăн пекех судпа палăртнă айăплав тапхăрĕ пĕтмен пулсан, следствири çынна та ку тапхăрта çара ямаççĕ.




Çавăн пекех призывпа çара ăсатассинчен хăтарнă граждансен категорине те палăртнă: ăсчах степенĕ пуррисем, сывлăх тĕлĕшĕнчен çара юрăхсăр тесе çирĕплетнисем, Раççей Федерацийĕнче çар службинче халĕ тăракансем е тăнисем, альтернатива граждан службинче тăнисем е халĕ тăракансем, призывпа çара кайса служба тивĕçне пурнăçланă вăхăтра пуç хунисен тăван пиччĕшĕ-шăллĕсем тата ывăлĕсем».

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ тата оборона министрĕ çирĕплетсех каларĕç ĕнтĕ, призывниксене хĕрӳ вырăнсене илсе каймаççĕ. Яшсем ятарлă çар операцийĕ пынă вырăнсемпе чикĕленекен регионсенче службăра тăни уйрăм йĕркепе иртме пултарнине президент нумаях пулмасть каларĕ.

Владимир Казаков пĕлтернĕ тăрăх, халĕ пур призывник та, пĕлӳ шайне пăхмасăрах, çар чаçĕнче контракт çырма пултарать.

Тепĕр самант – çар училищине вĕренме кĕресси. Хальхи вăхăтра йышăну комиссийĕсем документсем йышăнма пуçланă ĕнтĕ. Йышăну комиссийĕ Шупашкарти кадет корпусĕнче ĕçлет. Çапах та унта кайиччен чи малтан çар комиссариатне çитмелле, унта документсем йĕркелеме пулăшаççĕ. Çакна валли вăхăт нумаях юлмасть – июлĕн 1-мĕшĕччен ĕлкĕрмелле.

Çитес çул çуркуннехи призывпа çар ретне тăма хатĕрленекенсен вара ДОСААФ урлă тӳлевсĕр вĕренме шăпах вăхăт çителĕклĕ.

**Наталия НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: призывниксем Раççей çарĕн ретне тăма хатĕр.**

Паянхи паттăрсем

# Çар ĕçĕн ветеранĕ каллех стройра

«Каймалла пулсан каймалла», – çапла каланă Анаткас Апашра çуралса ӳснĕ Яков Яковлев алла повестка илсен. Ятарлă çар операцине вăл мобилизациленисен пĕрремĕш ушкăнĕпе кайнăччĕ – пĕлтĕр сентябрĕн 26-мĕшĕнче.

Яков хăй вăхăтĕнче çар çынни пулнă, контрактпа службăра тăнă. «Пурĕ 10 çул. Чечен Республика территорийĕнчи вăрçăн икĕ тапхăрне те хутшăннă, Таджикистанра 6 çул служба тивĕçне пурнăçланă. Выслугăпа пенсие тухнă ĕнтĕ», – тет салтак.

Çав 10 çул хĕрӳ вырăнсенче, вăрçăра иртнине шута илсен, унăн çар ĕç опычĕ самаях пысăк. Çавăнпа ятарлă çар операцине хутшăнакансен йышĕнчен ăна тӳрех взвод командирĕн çумĕ пулма шаннинчен те тĕлĕнме кирлĕ мар.

«Пире Ульяновскра тумтирпе, хĕç-пăшалпа тивĕçтерчĕç тӳрех – салтака чи малтанах мĕн кирлĕ, çавăнпа. Икĕ эрне вĕренӳ пулчĕ. Çав вăхăтра хам мĕн пĕлнине ыттисене вĕрентрĕм. Ытлашши вăхăчĕ те пулмарĕ ĕнтĕ. Арçынсен те малтанах вĕренес туртăмĕ пурччĕ, вĕренчĕç. Çынна малтанах вĕрентмелле, интерес пур чухне», – каласа парать Яков.

Вĕренӳ хыççăн вĕсене, чăвашсене, пурне те саперсен ротине е тата артиллерине, е çар полицине, е медвзвода çирĕплетнĕ. Ульяновск облаçĕнчен кĕçех Херсон облаçне илсе çитернĕ.

«Камăн мĕнле туйăм пулни пирки калама пултараймастăп паллах. Манра нимӗнле улшăну та пулман. Малалла мĕн пулма пултарассине эпĕ лайăх пĕлсе, ăнланса тăнă. Мана унта хăнăхма та вăхăт кирлĕ пулман», – тет Яков çар операцийĕнчи пĕрремĕш кунсене аса илнĕ май.

«Малтанах взвод командирĕн çумĕ пултăм, хыççăн командира куçарчĕç. Халĕ – хĕç-пăшал припасĕсен склачĕн начальникĕ. Çын пулман вăл должноçра. Хĕç-пăшал, хĕç-пăшал припасĕсем енĕпе пĕлӳпе опыт пуртан, мана унта куçарчĕç. Пĕтĕмпех пĕлетĕп теме çук, хам та вĕренсе пыратăп», – тет вăл.




Яков каланă тăрăх, вăл кирек мĕнле ĕçе те вĕçне çити çитерме хăнăхнă, каланă – тунă. Çавăнпа та, алла повестка илсен те, çемьере хирĕç калакан пулман – каятăп тенĕскер каятех. Тата вăл присяга панă. Кун пирки вунтăватă çул иртсен те манман.

Мăшăрĕпе вĕсен пĕр ача ӳсет. «Хальлĕхе ача пĕчĕкха. Мăшăр, тăвансем паллах, отпускра лайăх кĕтсе илчĕç. Тăвансемпе тĕл пулса калаçнă, пуçтарăннă. Май пур чухне эпир яланах çыхăнăва тухнă, вырăнти пирки ыйтса пĕлнĕ, эпĕ – çемьери лару-тăру пирки те», – тет.

Яков ял-йыш пухса панă гуманитари пулăшăвĕ пирки те каламасăр иртмерĕ. «Ульяновск хулинче чухнех пирĕн пата юлташсем, тăвансем пулăшупа килме пуçларĕç. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкартан мобилизациленисем муркашсем çине ăмсанса пăхатчĕç – гуманитари пулăшăвĕ нумай леçсе паратчĕç пире. Кĕркуннепе хĕлле çынсем пулăшу парас тесе уйрăмах нумай тăрăшрĕç. Тавах пулăшакансене пурне те», – тет хӳтĕлевçĕ.

Ял çынни, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи пекех, май пуррипе темĕнпе те пулăшма тăрăшать. Тăварланă хăяр, çи-пуç, кăмакасем, савăт-сапа… – темĕнпе те. Салтаксем патĕнче вара тушенка, тĕрлĕ консерва нихăçан та ытлашши пулмасть, пирус пекех.

Малтанхи вăхăтра пур япали те питĕ вырăнлă пулнине калать Яков. Лавккана тухма май пур чух вара унта тухса кĕреççĕ, апат-çимĕç туянаççĕ.

Паллах, ятарлă çар операцийĕнче пĕтĕмпех приказ пурнăçлассипе çыхăннă. Пирĕн ентешсене малтанах Оборона министерствин морпех полкĕ çумне явăçтарнă. «Саперно-инженерно-строительный взвод туса хучĕç. Командиртан нумай килет ĕнтĕ, çапах та эпир, чăвашсем, туслă пурнăкатпăр. Пирĕн салтаксем территорие минăсенчен тасатма, минăсем лартма та çӳреççĕ, оборона линийĕсене тума та çӳренĕ маларах – кашнин хăйĕн ĕç, приказ. Приказа тӳрĕ кăмăлпа та ответлăха туйса пурнăçламалла», – палăртрĕ хăйĕн шухăшне ентеш.

«Хăрушлăхĕ пур, куратпăр унта. Политикăпа кăсăкланкаланăран унччен те шухăшланă-ха эпĕ унти лару-тăру лăпкăн вĕçленмесси пирки. Интуици тени пулнă манăн унччен», – терĕ каλаçăва вĕçличчен Шматко позывнойпе çӳрекен ентеш.

Халĕ хăйсен ирĕкĕпе нумаййăн ятарлă çар операцине каяççĕ. Вĕсен çар тирпейĕхĕ (çакна вырăна тирпейлесе тăрасси тесе мар, анлăрах ăнланмалла), асăрханулăхпа тимлĕх пулмаллине аса илтерес кăмăллă пулчĕ Яков.

«Йĕркеллĕ çыннăн хăрас туйăм та пулмалла. Ответлăх, чăтăмлăх кирлĕ, дисциплина. Чи пĕлтерĕшли – Тăван çĕршыва юратмалла, эпир ăна тата хамăрăн халăха хӳтĕлетпĕр», – тарăн шухăшпа вĕçлерĕ калаçăва çар ĕçĕн ветеранĕ.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Сывлăх страници

# Хырăм çинчи çуран хăтăлма

Тухтăрсем çавна аса илтереççĕ. Кирек епле апатлану та тулли пулма тивĕç: обязательнăй майпа унта белок та, углеводсем тата çусем те пулмалла. Унсăрăн çисе тăранаймастăн е хăвăрт выçса каятăн. Шайлашуллă апатланма хистекен ытти сăлтавсем те пур. Хырăм çинчи çуран хăпма тăрăшакансемшĕн те çакă пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Начарланас тесе хăшĕсем пăтă çине кусаççĕ. Пăтă ирхине кăна мар, çавăн пекех кăнтăрла та, каçхине те çиеççĕ.

**Эндокринолог врач, медицина наукисен докторĕ Зухра Павлова** хăйĕн Telegram-каналĕнче ăнлантарса панă тăрăх, кашни ир сĕтпе мар, шывпа хатĕрленĕ пăтă çини те начарланма тĕллев лартнă çыншăн чи юрăхлă вариант мар. Калăпăр, ирсерен белок хушмасăр сĕлĕ пăтти кăна тата услам çу хушса çиес пулсан, мышца масси чакма тытăнать, çусен тĕртĕмĕ вара хушăнать. Алла пулсан эпир çу вырăнне чи хаклине çухататпăр.

«Тĕрĕссипе пăтă вăл йывăрăша чакарма мар, ăна хушма чи лайăх çимĕç пулса тăрать», – палăртнă тухтăр.

Специалист татах аса илтернĕ. Апатланнă чухне белок яланах пулма тивĕç. Уйрăмах кĕлеткене йăрăсрах тăвас, ытлашши çусенчен хăтăлас тетĕр пулсан.

«Çăмарта çиес килмест пулсан, тăпăрчă çийĕр. Е тата пĕçернĕ чăх ашĕ те юрăхлă. Вĕсемпе кăна 4 – 5 кашăк пăтă çиме юрать», – тенĕ специалист.

Ирхи чи лайăх апатлану валли тухтăр калакла пĕçернĕ çăмарта тата пахча çимĕçпе хатĕрленĕ омлет тесе асăннă.

# Чĕре сывă пултăр тесен

50 çул урлă каçнă хыççăн çыннăн тĕрлĕрен пероблема палăрма тытăнать: гипертони, ишеми, аритми, холестерин шайĕ пысăкки тата сахăр диабечĕ. Çаксемех инфаркт е инсульт патне те çитерме пултараççĕ. Çавăн пирки каласа пама кăмăл тунă **медицина наукисен кандидачĕ Анна Кореневич кардиолог.**

Врач палăртнă тăрăх, алкоголь ĕçессине чакарни тата пирус туртма пăрахни кăна çителĕксĕр. Тĕп йăнăшсенчен пĕри – вăйхал активлăхĕ çитменни. Сăмах спортзалри тренировкăсем е куллен чупасси пирки пымасть. Хăш чухне ытларах утма тытăнни те çителĕклĕ. Утăмсене шутлани кирлех мар. Куллен уçă сывлăшра пĕр сехет уçăлса çӳрени те усăллă.

«Ытларах утма тăрăшас пулать. Мĕн чухлĕ нумайрах куçса çӳретĕн, чĕре çавăн чухлĕ сахалрах çийĕнет. Çакă тĕлĕнмелле пек туйăнать пулин те», – ăнлантарса панă вăл.

Апатлану пирки сăмах пырать пулсан, нумай çимĕçрен пуçĕпех хăпас пулать. Пахча çимĕçпе улма-çырла вара ытларах çиме тăрăшмалла. Çуллă тата пылак çимĕç çиессине чакармалла. Çавăн пекех организмри шыв шайне тытса тăмалла, шыв ĕçессине кофепе, газ напиткĕсемпе тата сĕткенсемпе ылмаштармалла мар.

Ыйхă пахалăхĕ çине тимлĕх уйăрас пулать. Çыннăн çителĕклĕ таран канмалла.

Вĕçĕрхенесси тата пăлханасси ан пултăр. Пĕтĕмпех чĕре патне йышăнма кирлĕ мар. Хальхи тата паянхи пурнăçпа пурăнмалла, унччензи кӳренӳсене тата чĕре суранĕсене манма тăрăшмалла.

# Аджика

Кирлĕ: 2,5 кг помидор, 1 кг кишĕр, çавăн чухлех пан улми, 1,5 чей кашăкĕ 70 процентлă уксус, 1 кг пылак пăрăç, хĕрлĕ 3-5 пăрăç, 100 г аджика, 1 стакан сахăр, апат кашăкĕн 4-мĕш пайĕ тăвар, 1 стакан ӳсен-тăран çăвĕ, 200 г ыхра.

Пахча çимĕçе çуса тасатмалла, аш арманĕпе авăртса кастрюле ямалла. Унта аджика хушса вăйсăр çулăм çинче пĕр сехет пĕçермелле. Хыççăн сахăр, ӳсен-тăран çăвĕ, тăвар, лапчăтнă ыхра, уксус хушмалла.

Хатĕр аджикăна стерилизациленĕ банкăсене вĕриллех тултармалла, виткĕчпе хупмалла.

# Алкоголизмран сывалма пулать-и?

Алкоголизм – вăраха пыракан йывăр чир. Вăл алкоголь вĕçĕм тата чылай вăхăт ĕçсе пурăннипе аталанать. Çыннăн спирт шĕвекĕ патне туртăм вăйлансах пырать. Вăл эрех ĕçмесĕр пурăнайми пулать.

Шел пулин те, çак чир çын çумне ĕмĕрлĕхех çулăхать. Алкоголизмран пĕтĕмĕшлех ниепле те сывалма май çук. Анчах та ăна чарса лартма пулать – урă пурнăç йĕркине тытса пыма тытăннипе. Алкоголик алкоголь йышăнма пăрахать пулсан, унăн чирĕ палăрма пăрахать тата малалла аталанмасть. Пĕтĕмпех ăнланмалла та ансат пек.

Анчах та çавна яланах асра тытас пулать. Алла тытнă пĕремĕш черкке йывăр чирĕн «çыварракан» механизмне çĕнĕрен ĕçлеттерсе ярать. Кун пекки кирек хăш самантра та пулма пултарать. Эсир 5, 10 е 15 çул ĕçмен – ку пĕлтерĕшлĕ мар. Çавна ăса илес пулать: алкоголик сывă çынсем пек «кăшт кăна, пĕчĕкшер» ĕçме ниепле те вĕренеймест. Çавăнпа та спирт шĕвекне пачах ĕçмелле мар. Алкоголь витĕмĕ çавăн пек.

Алла пулин те, ĕçме пăрахасси чи йывăрри мар. Чи йывăрри – алкогольсĕр пурăнма вĕренесси. Урăлăх – унчен ĕçнĕ çыншăн пачах çĕнĕ çул. Алкогольсĕр пурнăç кичем те интереслĕ мар пек туйăнма пултарать: туйăмсем – нуль, нимĕнле савăнăç та çук, урă чухне çынсемпе хутшăнма питĕ йывăр. Çитменнине тата унченхи «юлташсем» тӳрĕ çул çинчен пăрма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та алкоголизм проблемине пĕччен çĕнтерме питĕ йывăр.

Кун пек лару-тăрура тăвансен тата çывăх çынсен пулăшăвĕ, психологи тата кăмăл-туйăм тĕрекĕ тем пекех кирлĕ. Унчен вăл мĕнле пурăнни пирки аса илтерсе тăма кирлĕ мар.

Специалистсенчен, психологран пулăшу ыйтма тивет. Вĕсем пурнăç хаклăхĕсене мала хума, алкогольсĕр тулли пурнăçпа пурăнма тытăнма, пурнăç тĕллевне тупма пулăшĕç. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çавăн пекех кун пек çыннăн çемйинче йĕркеллĕ хутшăнусем туса парассипе, кăмăл-туйăм тăнăçлăхне тупма пулăшассипе те çыхăннă.

Спирт напиткĕсене мĕнпе ылмаштарасси пирки шухăшласа пăхас пулать. Эрех ĕçме пăрахсан та пурнăç тулли те интереслĕ пултăр тесен, мĕнпе те пулин усăллипе туслашас пулать: е спортпа, е интереслĕ ĕç тупмалла, е харпăр хăйĕн вĕренĕвĕ çине тимлĕх уйăрма тытăнмалла.

**Елена ЕГОРОВА,**
**общество сыхлавĕпе медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

# Шатра чирĕ

**Шатра чирĕ (ветряная оспа)** – вирус этиологийĕн инфекци чирĕ. Кун пек чухне ӳт çине хăмпăланакан пĕчĕк шатрасем тухаççĕ. Шатра чирне ертекенĕ – 3-мĕш типлă герпес вирусĕ. Вăл чирлĕ çынран калаçнă, ӳсĕрнĕ е сывланă чухне ерет.

Шатра чирĕ ачасен ытларах сарăлнă инфекцийĕ шутне кĕрет. Ӳт çине кĕçĕтекен вĕтĕ шатра тухса тулать. Хальхи вăхăтра больницăра нимĕнле хушма тĕпчев ирттермесĕрех шатра чирне палăртма май пур. Сиплев процедури ытларах унăн симптомĕсене сиплессипе çыхăннă.

Çынсенчен ытларахăшĕ ку инфекципе чирлет. Шатра чирĕпе чирленĕ хыççăн ĕмĕр тăршшĕпех иммунитет сыхланса юлать.

Ача çуралсанах малтанхи уйăхсенче инфекциren амăшĕн антителисене пула сыхланать. Ачасем шатра чирĕпе ытларах чухне шкула çӳреме тытăниччен тата кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне чирлеççĕ. Çынсен 70 – 90 проценчĕ ку чире 15 çула çитиччен чирлесе ирттерет. Чирлессин шайĕ хулара пурăнакансем хушшинче, ялта пурăнакансемпе танлаштарсан, икĕ хут пысăкрах. Чи нумайĕн унпа кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтра чирлеççĕ.

Шатра чирĕн профилактики ăна ача-пăча коллективĕсене илсе кĕрессине асрăхаттарассипе çыхăннă. Çавăнпа та ача шатра чирĕпе чирленĕ тĕслĕх пулсан карантин мероприятийĕсене туса ирттерме пăхнă. Чирлекене 9 кунлăха изоляцилеççĕ, унпа хутшăннисене 21 кунлăха уйăраççĕ.

Юлашки çулсенче шатра чирĕнчен вакцинацилессипе ĕçлеççĕ. Ку тĕллевпе «Варилрикс» (Бельги) тата «Окавакс» (Япони) вакцинăсемпе усă кураççĕ.

**В. ПЕТРОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн эпидемиолог врача пулăшаканĕ.**

# Сывлăхшăн çав-çавах сиенлĕ

Çынсем никотин продукцийĕн сиенĕ пирки аван пĕлеççĕ пулин те, пирус туртнин проблеми çав-çавах актуаллă пулса тăрать. Нумайăшĕ врачсен сĕнĕвĕсене уяма шухăшламасть, пирус туртма пăрахма тăрăшмасть. Юлашки вăхăтра вара уйрăмах çамрăксем хушшинче никотинлă ытти йышши продукци сарăлни палăрать. Кусем вĕсем вейпсем, электрон сигаретсем т. ыт. те. Çак продукцие туса кăларакансем тата сутуçăсем вĕсене хăнăхнă сигаретсем вырăнне усă курмалли сиенсĕр япала пек кăтартма хăтланаççĕ. Тĕрĕссипе вара çакă пĕтĕмпех ултав пулса тăрать.

Сигаретсенчи пекех, вĕсенче те никотин тата ытти наркăмăшлă япаласем пур. Электрон сигаретсенче тата табак хĕртмелли системăра синтетика никотинĕ пур. Вăл уйрăмах наркăмăшлă шутланать. Çын ăна хăвăрт хăнăхать, вăл вара тымарсене сиенлет. Кун пек продукцире çавăн пекех карбол пĕрлешĕвĕсем, наркăмăшлă альдегидсем, тимĕр тĕпренчĕкĕсем, ытти токсинсем те пур. Асăннă продуктсене ачасемшĕн илĕртӳллĕ тума усă куракан ароматизаторсем вара тип пыр тата ӳпке шыççине аталантараççĕ.

Сигарет туртакан çул çитмен ачасен астăвăмĕ самай япăхланать тата пуç мимин ĕçлеслĕхĕ хавшать, çавăн пекех ӳчĕ, çӳçĕ тата шăлĕсем те хавшаççĕ, куç курасси малтанхи пек пумасть. Малашне вара çакă тĕрлĕ чир-чĕр сăлтавĕ те пулса тăма пултарать, вăл шутра – усал шыçă чирĕсен те. Раççейре кăна çуллен 400 пин çынна яхăн пирус туртнипе çыхăннă чирсене пула çĕре кĕрет.

Никотин продукцийĕн нагативлă витĕмĕ пирки ăнланса илнĕ май, кашниех хăйĕншĕн çирĕп йышăну тума тивĕç: самантлăх айхашу е çирĕп сывлăх хаклăрах. Сахал мар укçа-тенкĕ расхутласа наркăмăшлă япаласем ăшчике тултарни, сывалма май çук чирсем шыраса тупни – ăссăрла япала.

Ан манăр, кирек епле накотин продукцийĕ те – чертлĕ коммерци продукчĕ. Ăна туса кăларасси ытларах тупăш илессипе кăна çыхăннă. Çакă сывлăха сыхлассипе пачах çыхăнман.

**Антонина ТАБАРДАК,**
**обществăлла сывлăхпа медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

# Кăкăр шăмми айĕнче ыратсан

Стенокарди – чĕре чирĕ. Вăл кăкăр шăмми айĕнче питĕ хытă ыратнипе палăрать. Çакă чĕрен юн тымарĕсем хĕсĕннине пула унăн мускулĕсем патне юн сахал пынăран кислород çителĕклĕ пулманнипе пулать. Ку чирпе аптăраканăн мĕн пĕлмелле-ха, мĕн асра тытмалла?

Стенокарди чухне вăй хурса нумай ĕçлесен те, пăшăрханма тивсен те чĕре ыратать. Кун пек чухне çынна инфаркт çапса антарас хăрушлăх пысăк. Çак чирĕн тĕп сăлтавĕ атеросклерозпа çыхăннă. Урăхла каласан, чĕререн тĕрлĕ органсем патне юн валеçекен тымарсенче холестерин чăмаккисем пухăнниле тата вĕсем ӳсме тытăннипе. Çавна май юн тымарĕ майĕпен пĕрĕнсе пырать, унăн пиçĕлĕхĕ çухалать.

**Стенокарди паллисем**

Кашни чирĕн хăй пирки систерекен уйрăм паллăсем пур. Ку вăл стенокарди тĕлĕшпе те ют мар. Асăннă чир систермĕшĕсем çаксем пулнине кашнин асра тытмалла:

– сывласа илнĕ тата сывласа кăларнă вăхăтра ыратăва туйни;

– сывласси йывăрланни;

– кăкăрта темĕн пусăрăнтарнине е çунтарнине туйни;

– кăкăрти ырату сулахай алла тата хулпуççие куçни.

Приступ вăхăтĕнче чирлĕ çыннăн пăчăр-пăчăр тар тапса тухма, чĕре урăм-сурăм тапма, сывлăш пӳлĕнме, юн пусăмĕ ӳссе кайма пултарать.

**Пĕрремĕш пулăшу**

Чир палăрсан сывлăх хуралçисем пырса çитиччен çухалса каймалла мар. Лару-тăрăва çăмăллатма çынсен çакна асра тытмалла:

– малтанах лăпланса ларма тăрăшмалла;

– чĕлхе айне 1 таблетка нитроглицерин хумалла. Алă айĕнче вăл пулмасан аспирин таблеткипе те усă курма юрать;

– нитроглицерин усСине туймасан тепĕр таблетка хуни вырăнлă;

– 30 – 40 тумлам валокордин ĕçни те приступа сирме пулăшать;

– юн пусăмне вăйпа чакарма тăрăшмалла мар, приступ иртсен вăл хăех чакать.

Стенокарди приступĕ 15 минутран мала тăсăлмасть. Енчен те приступ вăхăчĕ 20 – 30 минута çитсе кайсан тата нитроглицерин кăкăр ыратнине ирттермесен хăвăртрах васкавлă пулăшу чĕнмелле.

Асăннă чир ытларах чухне самăр çынсен, гипертониксен, фастфудпа эрех-сăра юратакансен, тăтăшах табак туртакансен тĕл пулать. Çак ушкăна çавăн пекех сахал хускалакансем те, наркотикпа усă куракансем те, тăтăшах стресс тӳсекенсем те кĕме пултараççĕ.

Сывлăх хуралçисем çак диагноза лартнă çынсене выльăх çăвĕллĕ апат-çимĕçпе май пур таран сахалрах усă курма сĕнеççĕ. Вĕсен шутне сало, çуллă аш-какай, сыр, маргарин, хăйма кĕрессĕ, çавăн пекех кондитер изделийĕсем (шоколад, кофе), çăра чей, тăвар ытлашши пулмалла мар.

**Мĕн çимелле?**

Кун пек чухне чирлĕ çын мĕн çимеллипе интересленни ăнсăрт ыйту мар. Апатланура çак çимĕçсемпе усă курни сирĕншĕн юрăхлă çеç пулĕ:

– тĕрлĕрен пăтă (тулă, хуратул, вир, сĕлĕ, урпа);

– типĕтнĕ улма-çырла (курага, иçĕм çырли, хура слива);

– чĕрĕ е пĕçернĕ улма-çырлапа пахча çимĕç;

– тип çу;

– тĕрлĕрен пулă, тинĕс кулăсти;

– чăхпа кăркка какайĕ;

– сĕт çимĕçĕ;

– пыл.

Вĕсем пурте микроэлементсемпе тата витаминсемпе пуян. Кашниех организмри веществосен çаврăнăшне лайăхлатма пулăшнипе палăрса тăрать.

Сывлăх хуралçисем стенокарди диагнозĕ лартсан çийĕнчех пирус туртма пăрахмалла, стреслă лару-тăрăва лекесрен сыхланмалла. Тĕрĕс апатланнипе пĕрлех хул-çурăма тăтăш авкалани те пĕлтерĕшлĕ. Урăхла каласан – гимнастика туни кирлĕ. Ахальлĕн, сахал хускални холестерин çаврăнăшне пăсать, юн тымарĕсене атеросклероз чăмаккисем лартма пулăшать.

Маларах каланисем сире тӳр килеççĕ пулсан, ытларах уçăлса çӳреме, юхан шыв хĕрринче пулма тата вăрман сывлăшĕпе сывлама тăрăшмалла.

**Анна ИВАНОВА, кардиолог.**

Сĕнӳ-канаш

# Çулла асра тытмалла



Çуллахи хĕвел 12 сехетрен тытăнса 16 сехетчен уйрăмах активлă. Ку вăхăтра урамра уçă хĕвел çинче сахалрах пулма тăрăшăр. Унсăрăн пиçсе кайма е хĕвел антăратнипе аптăрама та пулать. Урама тухмасăр май çук пулсан вара сулхăн вырăн суйласа илĕр. Ӳт çине хĕвел пайăркисем тӳрремĕн лексерен асăрханăр. Ӳте хуплакан çи-пуçпа тата хĕвелтен хӳтĕлекен кремсемпе усă курăр. Хĕвел çинче пуçа карттус-шĕлепке тăхăнма ан манăр.

Çут çанталăк материалĕнчен çĕленĕ çипуç тăхăнăр – çĕр мамăкран е йĕтĕнрен. Кун пек çи-пуç ӳте сывлама май парать, организм вĕриленсе каймасть.

Шыв ĕçмелли режима пăхăнăр. Пӳлĕм температуриллĕ шыв ĕçĕр, вĕретнине е минерал шывĕ (газсăррине). Минерал шывĕ ĕçес килнине ирттерет тата пыр тĕлĕшпе те проблема пулмасть. Тухтăрсем талăкра 2 литртан кая мар шыв ĕçме сĕнеççĕ. Алкоголь ан ĕçĕр – вăл организма шывсăрлатать!

Улма-çырла тата пахча çимĕç пирки ан манăр. Сивĕ яшка, окрошка хатĕрлĕр. Организмăн ăшă шайлашулăхне тытса тăрас тесен, апат-çимĕç ытлашши сивĕ те, ытлашши вĕри те пулмалла мар. Çимĕçе холодильникра усрамалли пирки ан манăр. Пысăк температурăна пула сиенлĕ бактерисем ку тапхăрта хăвăрт ĕрчеççĕ.

Пляжра канатăр пулсан, çимĕçе валеçсе çӳрекенсенчен ан туянăр. Кун пек çимĕçпе наркăмăшланма та пулать.

Пӳртре сывлăш температури пысăк ан пултăр тесен, çӳрече каррисене карас пулать. Каçалапа пӳлĕмсене уçăлтарма ан манăр. Енчен те кондиционер пур пулсан, сывлăш юхăмĕ сирĕн çине тӳрремĕн лекмелле мар вырнаçтарăр. Кондиционера программăланă чухне çавна манмалла мар: пӳлĕмри тата урамри температура уйрăмлăхĕ 10 градусран ытла ан пултăр.

Ĕç тата кану режимне пăхăнăр. Нагрузка шайне чакарсан тата спорт тренировкисен вăхăтне кĕскетсен тĕрĕсрех. Шăрăх чухне вăй-хал активлăхĕ ăшă пуласси пилĕк хут ӳстерет. Çакă организмăн шыв саппасне нумай пĕтерет.

Шыв процедурисем пирки ан манăр. Душ кĕни тата шывра ишни организма питĕ лайăх уçăлтараççĕ тата шăрăха çăмăллăн чăтса ирттерме пулăшаççĕ.

**Екатерина ЕГОРОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн пĕтĕмĕшле гигиена врачĕ.**

# Садра ĕçлер-ха тăрăшса

**Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕ.** Йăрансене çумран тасатăр. Помидорсемпе пăрăçсене пăхса тухăр. Хăярсемпе кабачоксен тата помидорсен сарăхнă çулçисене иртĕр.

**Çĕртме уйăхĕн 24 – 25-мĕшĕсем.** Пахчари йăрансене удобрени пачах хывма юрамасть. Ку кунсем уйăх календарĕпе килĕшӳллĕн сад-пахчара ӳсен-тăранпа ĕçлеме юрăхсăр вăхăт. Анчах пахча çимĕçе ӳсĕм стимуляторĕпе пĕрĕхни ытлашши пулмасть. Çĕр улми речĕсене купалантармалла.

**Çĕртме уйăхĕн 26 – 28-мĕшĕсем.** Улма-çырла йывăççисемпе çырла тĕммисене пачах тĕкĕнме юрамасть. Пахча çимĕçе шăварни, апатлантарни, ӳсĕм стимуляторĕпе пĕрĕхни вырăнлă. Вĕсене халĕ апатлантарни пулас тухăç çине пысăк витĕм кӳрет. «Иккĕмĕш çăкăр» речĕсене купалантарассипе малалла ĕçлемелле. Йăрансене çумран иртмелле. Сăтăрçăсемпе кĕрешмелле.

# Сĕт продукчĕн усси тата сиенĕ

Сĕт тата унран хатĕрленĕ продуктсем çитĕннĕ çыншăн йĕркеллĕ пулма пултараççĕ-и-ха?

Сĕт продукчĕсем çимелле мар тесе шухăшлакансенчен ытларахăшĕ çакна ку продуктсем çыншăн чăн çимĕç пулса тăмаççĕ тесе ăнлантарать. Ку вăл чăннипех çапла. Тĕпленĕрех шухăшласа пăхас пулсан, çитĕнсен те сĕт ĕçекен чĕр чунсем Çĕр планета çинче çынсăр пуçне урăх çук. Çитменнине тата хăйсен йышĕн сĕтне кăна мар, çавăн пекех сĕтпе ӳстерекен ытти йышши чĕр чунсене те ĕçеççĕ.

Сĕт вăл чи малтанах тин çуралнă пепкене хăвăртрах çитĕнтерме кирлĕ. Анчах та çитĕннĕ çыннăн хăвăртрах ӳсме кирлĕ мар. Апла пулсан вăл сĕт мĕн тума ĕçет-ха?

Ял хуçалăхĕнче революци пуличчен те çынсем сĕт ĕçнĕ. Анчах та планета çинчи сĕтпе ӳстерекен ытти чĕр чун пекех. Тепĕр майлă каласан, пĕчĕк чухне кăна тата хăйсен амăшĕн кăкăр сĕтне çеç. Апла пулсан этем организмĕ çитĕнсе çитсен сĕт çимесĕрех йĕркеленнĕ.

Мĕншĕн сĕте тата хăш-пĕр сĕт çимĕçне çитĕннĕ çыннăн организмĕ йывăррăн йышăнать-ха?

Сĕтĕн тĕп углевочĕ – лактоза, тепĕр майлă – «сĕт сахăрĕ». Вăл ансат икĕ сахăртан тăрать – глюкозăран тата галактозăран. Ача чухне çыннăн организмĕ лактаза фермент туса кăларать. Вăл кăкăр сĕчĕн лактозине ăнăçлăнах ваклать. Анчах та çын çитĕннĕ май унăн организмĕ лактоза туса кăларасси чакса пырать. Çавăнпа та лактозăна йышăнма пултарасси чакса пырать, пачах пĕтме те пултарать.

Хальхи вăхăтра çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан çынсен 75 процентĕ çитĕнсе çитсен лактозăна йышăнма пултараймасть. Çакă вăл пурин те пĕр пекех палăрмасть, çапах та ытларахăшĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

Çавна та каласа хăвармалла. Пирĕн планета çинче тĕрлĕ регионта лактозăна йышăнма пултарайманнин шайĕ тĕрлĕрен.

**Çитĕннĕ çынсен лактозăна йышăнма пултарайманнин симптомĕсем.**

Ку симптомсем йывăррипчен тытăнса çăмăлли таранах пулма пултараççĕ. Çакă вăл организм лактаза ферментне мĕн чухлĕ туса кăларма пултарнинчен килет.

Чир симптомĕсем сĕт çимĕçĕсем апат ирĕлтерекен системăна лекнĕренпе 30 – 120 минут иртсен палăрма пуçлаççĕ.

Симптомсем çакăн пек палăрма пултараççĕ:

– хырăм карăнни;

– хырăм айĕнче ыратни, вăхăт-вăхăт касса килни;

– хырăмра пăкăртатни;

– диарея (хăш чухне пысăккипе тула кайнă чухне шĕвек тата кăпăкланса тухни);

– ăш пăтранни тата хăсни.

**Ольга ЕРМОЛАЕВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн фельдшер-лаборанчĕ.**



# Кĕпе-тумтир вараласан

**Асăрхамастăн та, кĕтмен çĕртен кĕпе-тумтире е скатерте вараласа хуратăн. Пĕрин акă кримплен пальто çине сысна çăвĕ лекет, теприн хитре тутăрĕ тутăхпа вараланать, виççĕмĕшĕн кĕпи – чернилпа. Килте вараланнă вырăна тасатмашкăн ятарласа кăларнă хатĕр çук чухне мĕн тумалла-ха?**

Тахçанах паллă ĕнтĕ, **чернил** лекнĕ вырăна тасатма помидор сĕткенĕ юрăхлă. Хăш-пĕр чернила тасатма помидор сĕткенĕ те пулăшаймасть. Вăл «Радуга» маркăллă чернила кăна аван тасатать. Чернил лекнĕ вырăна малтан сĕткенпе ислетĕр те полиэтилен çине сарăр. Вунă минут иртсен, сивĕ шывпа чӳхенĕ хыççăн тумха вырăнĕн палли те юлмасть. Тумха кивелнĕ пулсан, тасатма йывăртарах.

Ăна икĕ-виçĕ хут та ислетсе хума тивет. Вара тин çав вырăна сивĕ шывпа чӳхемелле. Шуранка йĕр юлсан – çунă хыççăн хĕвеле çаксан пĕтет.

Тин çеç чернилпа вараланнă кĕпе-тумтире нашатырь спирчĕ е чей соди янă шывра чӳхесе тасатсан аван.

Тепĕр чухне **шариклĕ ручка черниллĕпе** ала, сĕтел çинчи клеенка хăвăрт вараланать. Малтанах ăна йĕпетнĕ спичка пĕрчипе сăтăрăр, унтан супăньлĕ ăшă шывпа çăвăр.

**Сысна çăвĕпе, услам çупа, парафинпа** вараланнă вырăна икĕ енчен типĕтмелли хутпа е хут салфеткăпа хурса утюглаççĕ. Çу вара хут çине лекет. Сысна çăвĕпе вараланнă кĕпе-тумтире тасатмалли порошок – «Персоль».

Кĕпе-тумтир **тутăхпа** вараласан, лимон сĕткенĕ лайăх пулăшать. Ислетмелле, утюгпа пусса илмелле, ăшă шывра чӳхемелле.

Тахçанах тутăхпа вараланнă тумхана уксус эссенцийĕпе (çур стакан шыв пуçне пĕр чей кашăкĕ) усă курса чӳхенĕ хыççăн çуса тасатаççĕ.

Утюгпа якатнă чух кĕпе-тумтире асăрхамасăр **ĕнтсе яни** те пулкалать. Малтан ăна чĕрĕ сухан сĕткенĕпе ислетĕр. Çуса тасатсан, сивĕ шыва тепĕр икĕ-виçĕ сехетлĕхе ярса лартнă хыççăн тин кĕпе-тумтире чӳхесе типме çакса ярăр.

**Тарпа** вараланнă кĕпе-йĕм пĕр литр шыв пуçне пĕр ывăç тăвар янă шывра пĕр сехет хушши ислетсе çунă хыççăн аван тасалать.

Хăш чухне тумтир мĕнпе вараланнине пĕлме çук. Тасатма тăрсан сивĕ шывпа усă курăр. Вĕри шыв ытларах **кофепе, чейпе, улма-çырла сĕткенĕпе** вараланнă вырăнсене тасатнă чух аван пулăшать.

Асанне-кукамайсем ĕлĕкрен усă курнă меслете те манмала мар: вараланнă вырăна пушă тирĕк çине (тумха варри тĕлĕнче пултăр) кантрапа е резинкăпа туртăнтарса çыхса хурăр. Чейникри вĕресе тăракан шывпа, пĕчĕккĕн ярса, вараланнă вырăна сăтăрăр.

Тумха тасалман чух тумтире çĕнĕрен касса çĕлени те пулкалать. Вара тумхана çĕвĕ тĕлне лектерме тăрăшмалла. Çĕнĕрен çĕлеме май çук чухне, тумха ăçтине кура, кĕсье лартса, чĕнтĕр тытса хуплама та пулать.

Çу кунĕсем пуçлансанах, кил таврашĕнче хĕлле усă курмалли япаласене тирпейлĕн тасатса, çуса, пуçтарса хурсан аван.

**Ваткăллă çивиттие** çуллахи вăхăтра çусан лайăх. Анчах та çакна асра тытмалла: çунă чух ватка муклашкаланасран утияла супăньлĕ шывра тумтир щеткипе сăтăрса çăваççĕ. Тăрă шывра чухесе тасатнă хыççăн шыв сăрхăнса пĕтесси кĕтмелле. Утияла пĕтĕрсе пăрма юрамасть. Ăна хĕвелте типĕтмелле. Тĕсĕ каярсан шурă марля е çӳхе катанпир витмелле. Утиял малтанах пекех çемçе пултăр тесен, ăна типес умĕн вăхăтран вăхăта яка патакпа шаккама юрать.

